38-94

Я. Г. Рохлин



# ШАХМĂТЛА
## выляма вĕренесси

Чăвашгосиздат · 1938

Я. Г. РОХЛИН

# ШАХМӐТЛА ВЫЉАМА ВӖРЕНЕССИ

Вырӑсларан
*МИХ. АФАНАСЬЙӖВ*
куҫарнӑ

ЧӐВАШСЕН ГОСУДАРСТВА ИЗДАТӖЛСТВИ
ШУПАШКАР — 1938

## УМСĂМАХ

Совет çĕршывĕнче промышлĕннăç тата колхоз ĕçĕ пит те тĕреклĕн ӳссе пынă май ĕççыннисен культурлăхĕ те ӳсет. Совет влаçĕ кашни ĕççыннине вĕренме çул уçса пачĕ. Культурă çурчĕсен, клубсен хисепĕ куллен кун ӳссех пырат. Хапрăк-савăтсенче, колхозсенче тата тĕрлĕ учрежденисенче те хĕрлĕ кĕтессем пур. Хĕрлĕ кĕтесе рабочисемпе колхозниксем тата ытти работниксем те ĕçленĕ хыççăн культурăлă канма: хаçат-журналсем, кĕнекесем вулама, шахмăтла, шашкăла, доминола выльама пухăнаççĕ. Шахмăт вăййи—культурăлă, усăлă канма пулăшакан вăйăсенчен пĕри. Çавăнпа та вăл йулашки çулсенче массă хушшине вирлĕн сарăлчĕ. Совет çĕршывĕнче шахмăтла выльакансен йышĕ хăвăрттăн ӳсет. Вĕренес текенсем нумай, анчах вĕсене вĕренме пулăшакан кружоксем сахал, кĕнекесем те нумайах мар. Чăвашла çырнă кĕнекесем пачах пулман. Чăваш ĕççыннисене шахмăтла выльама вĕренес ĕçре пулăшу парас тесе, Чăвашсен Государствă Издатĕлстви çак кĕнекене вырăсларан куçарма йышăнчĕ. Ку кĕнекере шахмăт вăййине вĕренесси çинчен кăна çырнă. Çавăнпа та кунта лайăх выльакансен вăййисем çинчен, тĕнчипе паллă шахмăт ăстисен партийĕсем çинчен çырман. Ку кĕнеке тăрăх вĕренсе тухса, ун çинче çырнисене тĕплĕн пĕлсессĕн, выльама вĕренекенсем практикăра хăйсен ăсталăхне хăпартма тата пысăк ăстасен партийĕсене сăнама та пултараççĕ.

Шахмăт çинчен чăвашла кĕнеке пулманнипе çитменнине тата куçарас ĕçе хам тин çеç хăнăхнă пирки те, куçарнă чухне чăрмавсем нумай пулчĕç. Пуринчен ытларах терминсем тĕлĕшпе пит те кансĕр пулчĕ. Кĕнекене ăнланмала тăвас килет, анчах терминсене темле йышăнни усăлларахххине пĕччен-иккĕн çавăрса илме йăвăртарах. Шахмăт терминĕсем пирки халĕ те акă епĕр хамăр сăмаха тĕплĕн татса панă тесе калаймастпăр. Сăмахран: „çийес", „çапас", „çапса илес", „ход", „çӳрев", „сикни" йепле кала-

сан аванрах-ха? тата фигурă йачĕсем те пурте йуралă-и? „Коң“, тессине Т „лаша“ тетпĕр, çырасса „Л“ саспаллипе мар „К“ саспаллипе паллă тăватпăр. Кунсăр пуçне тата раснах шахмăт хăми çинчи йатсене чăвашла мĕнле каласан йуралăрах пек. „Клеткă“, „полĕ“ терминсене „ана“ „хир“, „пўлĕм“, „лаптăк“, „йăва“ тесе йат парас мар-ши? тесе те тăма тиврĕ малтанах. Анчах, вырăсла кĕнекесене ăнланма та çăмăлтарах пултăр тесе, терминсене, фигурă йачĕсене те çаплипех хăварма тăрăшрăмăр. Çавăн пиркийех ходсене çырса пырасса та пĕтĕм тĕнчипе йышăннă пек, латинла саспаллисемпех паллă тăватпăр. Вĕренесех текен çын, тўррипе каласан, ăна часах хăнăхма та пултарат.

Ку кĕнеке пирĕн сăнавлă ĕç кăна-ха. Ку кĕнекепе йепле усă курни çинчен, мĕнле çитменлĕхсем пурри çинчен, малашне мĕнле çырсан аванрах пуласси çинчен те Издатĕлствă адрĕсĕпе Шупашкара çырса пĕлтерме ыйтатпăр.

**Куçараканĕ.**

## МАЛТАН ӐНЛАНТАРСА ПАНИ

Шахмӑт вӑййине вӗренме йӑвӑрах мар. Ӑстӑнне ҫухатман ҫын ӑна такам та вӗренме пултарать. Ӑна тӗплӗн пӗлсе ҫитсе „шахмӑт ӑсти“ пулас тесен, нумай вӑхӑт кирлӗ, нумай тӑрӑшмала. Анчах та шахмӑтла тӗрӗс выљама вӗренме ҫӑмӑл тата вӑхӑт та ытлашши нумайах кирлӗ мар.

Шахмӑтла выљама икӗ майпа вӗренме пулать: йе шахмӑт вӑййине лайӑх пӗлекен йулташсем кӑтартнипе, йе шахмӑт ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесемпе усӑ курса вӗренетӗн. Ҫак кӗнекене шахмӑтла выљама вӗренес текенсене пулӑшас тесе ҫырнӑ. Вӑл усӑ патӑр тесен, паллах, унпа пӗлсе усӑ курас пулать.

Шахмӑт вӑййи ҫинчен ҫырнӑ кӗнекене пӗр васкамасӑр, кунсерен, пӑртакшарӑн (пӗрер, икшер сехет) вулас пулать. Ҫакӑн пек вуласа пырсан кӑна вуланине тӑнланма тата астума пулать. Кӗнекере каланине лайӑх ӑнланса илес тесен, мӗн вуланине выљаса, практикӑра туса пӑхма вуланӑ чухне йаланах умра шахмӑт хӑмипе фигурӑсем пулмала. Пӗрерӗн те ушкӑнӑн та вӗренме йурать. Ушкӑнпа вӗренсен, йулташсен шухӑшӗсене пӗлсе, вӗсем кӑтартнисемпе усӑ курма пулӑшать; вара ӗҫ хӑвӑртрах та лайӑхрах та кайма пултарать.

Вуланӑ чухне ӑнланман вырӑнсем тӗл пулсан, вӗренекенӗн куншӑн кӳренсе тӑма, малала вӗренме пӑрахма кирлӗ мар. Вӗренме пуҫласанах кун пек йаланах пулкалать. Ӑнланман вырӑнсене тепӗр хут вуласа, тӗплӗ шухӑшласа пӑхмала. Ӑнланса илеймен вырӑнсене ӑнланса илмесӗр малала каймала мар, мӗншӗн тесен, унсӑрӑн малали материал татах та ӑнланмала мар пулса пырать. Шахмӑтра та, ытти ӗҫри пекех, ч ӑ т ӑ м л ӑ х тата т ӑ р ӑ ш н и кирлӗ. Вӗренме пуҫланӑ чухне ҫине тӑрса хӑнӑхсан, тӑрӑшса вӗренсен кӑна ӗҫ ҫӑмӑллӑн кайма пултарать.

Кĕнекене епĕр, ăнлантарса панисемпе правилăсене çăмăллăн ăнланмала пултăр тесе, диаграммăсем чылай кўртетпĕр. Кунсăр пуçне тата кĕнекере мĕн каланине вулакансем лайăх ăнланччăр тесе, епĕр вĕсене кĕнеке хыçĕнчи ыйтусен тупсăмне тупма хушатпăр.

Кĕнекене вуласа тухса пĕтĕмпех ăнлансан, вулакан, хăй мĕн чухлĕ ăнланнипе пĕлўне тĕрĕслеме, никам та пулăшмасăрах йулташĕсемпе выљама пултарать. Вăйă правилисемпе ходсене вĕренсе çитсен, çак кĕнекене çурри таран вĕренсен—выљама йурать те вара.

Шахмăт вăййинче пĕртен пĕр çăмăл май — иккĕн хирехирĕç выљани (соревновани) пулать (ăна „шахмăт партийĕ" теççĕ). Пĕр парти выљанă хыççăн пĕри çĕнтерчĕ (лартрĕ) пулсан, çĕнтерекенне тўрех, йулташĕнчен вăйлă выљать, теме çук. Икĕ шахматисăн вăйĕсене танлаштарса пăхма, хăшĕ лайăхрах выљанине пĕлме „матч" тăваççĕ: кунта пĕр парти анчах мар, темиçе парти выљаççĕ. Çак темиçе партирен нумай парти выљаса илекенне вара вăйлă выљакан теççĕ. Тата йышлăн та шахмăт вăййипе соревновани тума пулать, ăна „турнир" теççĕ. Кунта кашни, пуринпе те пĕрер (йе икшер) парти выљать. Турнирте чи нумай парти выљаса илекенĕ турнирте мала тухакан пулса тăрать. Çавăнпа вăл хăй выљакан коллективăн паллă шахматисĕ шутланать. Кунсăр пуçне тата „коллективлă матчсем" те пулаççĕ. Кунта икĕ коллектив (икĕ хула, икĕ клуб, икĕ йал) хăйсем йенчен вăйлă шахматиссене уйăраççĕ, вĕсенчен кашнийех тепĕр коллективран килнĕ шахматиссемпе пĕрер (йе икшер) парти выљаççĕ. Нумай парти выљаса илекен коллектива вăйлă выљакан коллектив, теççĕ.

Çакăн пек коллективлă соревнованисемпе интереслеНекенсем йаланах нумай пулаççĕ.

## *Шахмăт хăми тата клеткăсене палăртасси.*

Шурă хут илсе, ăна тăватă йенчен те пĕр пек, тўрĕ кĕтес туса кассан, хут татăкĕ тăваткал пулса тăрать. (Тăваткал тесе пур кĕтесси те, пур йенĕ те пĕр пек формăна калаççĕ). Акă çавăн пек тăваткал ўкерчĕкĕ.

Халĕ ĕнтĕ çак тăваткала варринчен, çўлтен айалала тата сулахай йенчен сылтăмала линисем туртсан (хĕреслесе), епĕр пĕр тăваткал вырăнне тăватă пĕчĕк тăваткал

туса хуратпăр. Малала та ҫавăн пек пайласа пырсан, епĕр 16, 64 тата та нумай тăваткалсем тума пултаратпăр (ăна хăвăр туса пăхăр).

Шахмăт хăми 64 пĕр пек пĕчĕк тăваткаллă пулат̆. Пĕчĕк тăваткалсем лайăх палăрччĕр тесе, вĕсене ылмаштарса шурă тата хура краскăсемпе сăрланă: шурă клеткăпа йунашар пур йенчен те хура клеткăсем, хура клеткăпа йунашар пур йенчен те шурă клеткăсем тăмала сăрланă. Ҫапла вара, шахмăт хăми 32 шурă, 32 хура клеткăлă пулат̆. Ку „клеткăсене“ „полĕсем“ тесе чĕнме йышăннă, епĕр те малала йаланах вăл сăмахпа усă курăпăр.




Шахмăт хăмине икĕ выљакан хушшине лартнă чухне, хăман выљакантан сылтăм йенче тăракан кĕтесри клеткă йаланах шурă тĕслĕ пулмала (ӳкерчĕке пăх). Шахмăт ҫинчен ҫырнă кĕнекесем ҫинче шахмăт хăми ӳкерчĕкне (ун ҫине фигурăсене ӳкерсен ӳкермесен те) **диаграммă** теҫҫĕ.

1.



Малала шахмăт хăмин паллă пайĕсем мĕне пĕлтерни çинчен калăпăр.

Çӳлтен айалала (йе айалтан çӳлеле) тӳрĕ кайакан полĕ ĕречĕсем, „линисем“ тăваççĕ. Вăл линисенчен кашнине вертикаљ тесе чĕнеççĕ.

Çавăн пекех, сулахай йенчен сылтăмала (йе сылтăмран сулахайала) кайакан полĕ ĕречĕсемпе тӳрĕ линисем тăваççĕ, вĕсем епĕр пăхнă вĕртикаљсем урлă, вĕсене перĕнсе каçса кайаççĕ. Кун пек линисене горизонтаљсем теççĕ. Тата виççĕмĕш линисем пур. Вĕсем, пĕр тĕслĕ полĕсем тăрăх, полĕсен пĕр кĕтессинчен тепĕр хирĕç тăракан кĕтесĕ урлă, чалăшшăн, каçса кайаççĕ. Ку линисене диагонаљсем теççĕ. (2-мĕш диаграммăна пăх).

2. 


Диагонаљсем шуррисем те хурисем те пулаççĕ, тепĕр тĕслĕ каласан, диагонаљ пĕтĕмпех йе шурă йе хура полĕсенчен пулаť. Ытти линисем апла мар. Сăмахран, вертикаљпе горизонтаљсене çурри шурă, çурри хура полĕсем кĕреççĕ.

Шахмăт хăмине лайăх пĕлес пулаť, вертикаљсене, горизонтаљсене тата диагонаљсене тӳрех уйăрма хăнăхас пулаť. Çак линисем каçса кайакан полĕсем урлă шахмăтла выљанă вăхăтра шахмăт фигурисем шăваççĕ те („çӳреççĕ“) ĕнтĕ.

**Шахмăт хăми çинчи полĕсен кашнин хăйĕн йачĕ пур.** Кун пек туни полĕсем урлă фигурăсем çӳренине çырса пыма пулăшаť. Шахмăт фигурисем те икĕ тĕслĕ: „шуррисем“ тата „хурисем“ пулаççĕ. Выљакансенчен (шах-

матиссенчен) кашни мĕнле те пулсан пĕр тĕслĕ фигурăсемпе „шуррисемпе“ йе „хурисемпе“ выљат. Çавăнпа та, хăйсене те фигурăсен тĕсĕ йачĕпе чĕнеççĕ: „шуррисем“ йе „хурисем“, теççĕ. Вертикаљсемпе горизонтаљсен ĕречĕсене (иккĕшĕ те вĕсем сакăршар) çапла палăртаççĕ: вертикаљсене латин алфавитĕнчи (хĕвеланăç йенчи халăхсем пурте çакăн пек йышăннă)—a, b, c, d, e, f, g, h, саспаллисемпе палăртаççĕ. Вырăсла вĕсене—а, бэ, цэ, дэ, э, эф, жэ, аш), тесе чĕнеççĕ (горизонтаљсене 1, 2, 3, 4, 5, 6, 7, 8 цифрсемпе паллă тăваççĕ.

Мĕншĕн епĕр шахмăтра вырăсла саспаллисемпе усă курмастпăр-ха? тесе ыйтĕ вулакан. Епĕр малтанах каланăччĕ тĕнчере пур государствăра та тенĕ пекех шахмăтла выљаççĕ, час-часах пĕтĕм тĕнчипе соревнованисем пулаççĕ. Çавăн пирки, пĕтĕм тĕнчипе пĕр пек, пĕр „шахмăт чĕлхи“ пулни питĕ аван. Чăнахах та ĕнтĕ, латин алфавитне пĕлмен шахмăтиссене тăрăшса вĕренме лекет. Анчах, ку ĕç пысăк ĕçех мар, уссийĕ унăн пысăк: ăна пĕлни шахмăтра кăна мар, ытти ĕçре те кирлĕ пулат.

Ку паллăсене пĕлсе çитсен, епĕр хăман тĕрлĕ найĕсене çăмăл йатсемпе чĕнме пултаратпăр. Акă хăма çинче епĕр „*a* вертикаљ“, „*b* вертикаљ“, „*c* вертикаљ“, йе тата „1-мĕш горизонтаљ“, „2-мĕш горизонтаљ“ тата ытти те куратпăр (горизонтаљсене шутланă чухне йаланах шурă фигурăсемпе выљакан йенчен илсе хисеплеççĕ).

Кашни полĕн хăйĕн йачĕ пур. Вĕсене мĕнле вертикаљпе горизонтаљсем хушшинче ларни тăрăх йат панă. Полĕ йатне çырнă чухне, малтан вăл тăракан вертикале паллă тăвакан саспаллийе çыраççĕ, унпа йунашар вăл тăракан горизонтаљне паллă тăвакан цифăра çыраççĕ (3-пе 4-мĕш диаграммăна пăх).

Çак икĕ диаграммă кăтартнă тăрăх акă мĕн куратпăр шуррисен йенчен вертикаљсем *a*-ран пуçласа *h* патнеле сулахайран сылтăмала кайаççĕ, горизонтаљсем 1-рен пуçласа 8-мĕшне çитиччен айалтан çӳлеле кайаççĕ, хурисен йенчен урăхла: вертикаљсем *a*-ран пуçласа *h* патнеле сылтăмран сулахайала, горизонтаљсем 1-мĕшрен пуçласа 8-мĕшне çитиччен çӳлтен айалала пулаççĕ.

3-мĕшпе 4-мĕш диаграммă çинче палăртнă паллăсем, ш а х м ă т  н о т а ц и й ĕ пулса тăраççĕ, ăна кашни вĕренме пуçлаканăн лайăх астумала. Пушă вăхăтсенче пĕчĕккĕн вĕренсе, хăнăхса пырсассăн унта йăвăрри нимĕнех тĕ

3.




4.




çук. Шахмăт нотацийĕне лайăх пĕлсен кăна шахмăт кĕнекине лайăх вĕренме пулат̆.

### *Фигурăсем, пешкăсем тата вĕсем çӳренĕ ходсене çырса пыни.*

Выљама пуçличчен выљакансенчен иккĕшин те: шуррисен те хурисен те хăйсен аллинче 8-шар фигурă тата 8-шар пешкă пулат̆. Вĕсен йачĕсем çапла

♔ 1 корољ (Кр.) ♚

♕ 1 ферзĕ (Ф) ♛

♖ ♖ 2 ладйа (Л) ♜ ♜

♗ ♗ 2 слон (С) ♝ ♝

♘ ♘ 2 лаша (К) ♞ ♞

♙ ♙ ♙ ♙ ♙ ♙ ♙ ♙ 8 пешкă ♟ ♟ ♟ ♟ ♟ ♟ ♟ ♟

**Фигурăсен[1]) йачĕсем хыçĕнчи скобкă ăшĕнче çырни, фигурăсен йатне мĕнле палăртмалине кăтартат̆. Унпа шахмăт çинчен çырнă кĕнекесемпе журналсем çинче йаланах усă кураççĕ. Кунта ӳкернĕ пĕчĕк ӳкерчĕксем,**

[1]) Фигурăсем корољ, ферзĕ, слон, ладйа, лаша кăна пулин те, пешкăсене те фигурă тесе калаççĕ.

фигурӑсене мӗнле ӳкернине кӑтартать. Диаграммӑ ҫинче йаланах фигурӑсене ҫавӑн пек ӳкереҫҫӗ. Партине ҫырса пынине ӑнланас тесен, вӗренме пуҫлаканӑн фигурӑсене мӗнле ӳкернине тата вӗсен йачӗсене манас пулмасть.

Выљама пуҫланӑ чухне кунта кӑтартнӑ фигурӑсемпе пешкӑсем хӑма ҫинче, 5 мӗш диаграммӑра кӑтартнӑ пӗк, пӗр паллӑ йӗркепе тӑраҫҫӗ. Шахмӑт литературинче диаграммӑ ҫинче шурӑ фигурӑсене йаланах хӑман айал йенне лартма йышӑннӑ, хурисене—ҫӳл йенне лартса ӳкереҫҫӗ.

5-мӗш диаграммӑна тӗплӗн пӑхса тухар ха. Кунта епӗр малтанах полӗсене йат парса тухманнине куратпӑр (ун ҫинчен епӗр нумай пулмасть калаӑччӗ). Аван пултӑр тесе, вӗсене хӑман айал йенчен буквӑсемпе, сулахай йенчен числасемпе анчах паллӑ тунӑ. Вӗренекен шахмӑт нотацийӗне халӗ те пӗлеймест пулсан, вӑл хӑйне кирлӗ полӗне ҫакӑн пек тупма пултарать: ҫав полӗ урлӑ айалтан ҫӳлеле (вертикаљ) тата сулахайран сылтӑмала (горизонтаљ) линисем чӗрес пулать. Ҫак линисене паллӑ тӑвакан числапа саспалли ҫав полӗне пӗлтереҫҫӗ.

5-мӗш диаграммӑ ҫинчи фигурӑсене пӑхсассӑн малтанах мӗн куратпӑр ха епӗр? Малтанах, шурӑ фигурӑсем хӑман айал йенче, хура фигурӑсем хӑман ҫӳл йенче лараҫҫӗ. Вӑл фигурӑсем; короља хӑйне хирӗҫ выљакан короља хирӗҫ, ферзӗ ферзӗна хирӗҫ, слон слона хирӗҫ, лаша лашана хирӗҫ, ладйа ладйана хирӗҫ; шуррисем—пӗрремӗш горизонтаљ ҫинче (малтанхи ӗретре), хурисем—8-мӗш горизонтаљ ҫинче (хыҫалти ӗретре) лараҫҫӗ. Пешкӑсем—шуррисем, саккӑрӑшӗ те ӗретӗн 2-мӗш горизонтаљ ҫинче, хурисем—ҫиччӗмӗш горизонтаљ ҫинче лараҫҫӗ.

5.



Çапла вара, пĕр пек фигурăсем (шуррисемпе хурисем) пĕр-пĕрне хире хирĕç тăраççĕ. Выљама пуçлас умĕн корољсем (шурри те хури те) хăйсем тĕслĕ полĕ çинче тăмаççĕ (шурă корољ хура полĕ çинче, хура корољ шурă полĕ çинче). Ферзĕсем хăйсем тĕслĕ полĕ çинче, шурă ферзĕ шурă полĕ çинче, хура ферзĕ хура полĕ çинче пулаççĕ.

Йулашкинчен епĕр кашни выљаканăн 16-шар фигурă иккенне куратпăр (8 фигурă тата 8 пешкă).

Вăййа йаланах малтан шуррисем пуçлаççĕ. Малала, выљакансенчен кашни, черетлĕн пĕрин хыççăн тепри пĕрер ход тăваççĕ, кашни ходра фигурăна пĕр полĕ çинчен тепĕр полĕ çине сиктерсе пыраççĕ.

Пирĕн халĕ выљама пуçличчен, паллах, кашни фигурă мĕнле çӳренине, тата вĕсем мĕнле „çиме“ (çапса илме) пултарнине пĕлес пулаť. Малтанах çакна асра тытăпăр: хăвăн фигуру хăвăннех çапма пултараймасť, шурă фигурă хура фигурăна, хура фигурă шурă фигурăна кăна çапса илме (çиме) пултараť.

Унăн йĕрки çакăн пек: ш а х м ă т х ă м и ç и н ч е к а ш н и ф и г у р ă п ĕ р п а л л ă й ĕ р к е п е (п р а в и л ă п а) ç ӳ р е т, в ă л ф и г у р ă й е п е ш к ă л а р а к а н п о л ĕ ç и н е л а р м а т а т а у н у р л ă к а ç м а п у л т а р а й м а с ť. Анчах, ход йĕрки тăрăх пĕр тĕслĕ фигурă тепĕр тĕслĕ фигурă вырăнне ларма пултараť. Куна „çинĕ“ чухне анчах тăваççĕ. Çийессе çапла çийеççĕ: пĕр тĕслĕ фигурă тепĕр тĕслĕ фигурăна илсе ун вырăнне лараť. Кун пек тунине пĕр ход вырăнне шутлаççе. Çимеле чухне выљакан ăна çисен çимесен те пултараť, шахмăтла выљанă чухне шашкă вăййинчи пек ирĕксĕр çитермеççĕ. Фигурă тепĕр фигурă урлă каçса çӳреме пултараймасť, тенĕчĕ епĕр. Кун пек йĕркене ытти фигурăсем пăхăнсан та, лаша пăхăнмасť. Ун çинчен епĕр малала тĕплĕрех калатпăр. Фигурăсем малала та, кайала та, айаккинелле те кайма пултараççĕ. Пешкăсем апла мар, вĕсем малала кăна шума, сикме пултараççĕ.

Кашни фигурă мĕнле çӳренипе паллашас умĕн фигурăсем çӳренине (ходсене) мĕнле çырмалине пĕлес пулаť.

Шахмăт хăми çинче кашни полĕн хăйĕн йачĕ пур, тенĕччĕ маларах. Халĕ епĕр сире 5-мĕш диаграммă çинче d2, e6, g8, h5 полĕсене тупма хушатпăр. Фигурăсем шахмăт хăми çинче пĕр полĕ çинчен тепĕр полĕ çине çӳреç-

çĕ. Вĕсем çӳренине палăртас пулсан, малтан вăл мĕнле полĕ çинче тăнине, кайран вара мĕнле полĕ çине куçнине çырмала. Çак икĕ полĕ палли хушшине тире (—) çырас пулать. Фигура çийет пулсан, тире вырăнне пайланнине кăтартакан паллă (:) çыраççĕ. Фигурă малтан тăнă полĕ йатне çырнă чухне çав фигурăн йатне кĕскен çырмалла. Çакăн пек çăмăл меслет уйрăм ходсене анчах мар, пĕтĕм партине çырма пулăшать. Кайран çав çырнă тăрăх выљанă партине пăхса тухма çăмăл. Халĕ практикăра мĕнле тумалине ăнлантарса парăпăр. Малтанах фигурăсене кĕскен мĕнле палăртмалине асгуса илер. Кр—корољ, Ф—ферзĕ, Л—ладйа, С—слон, К—лаша. Халĕ ĕнтĕ ладйа мĕнле çӳренине тата вăл çӳренине мĕнле çырмалине пăхăпăр.

## ЛАДЙА.

6-мĕш диаграммă çинче d4 çинче ларакан фигурă ладйа пулать.

6.



Ладйа тӳрĕ линипе горизонтаљ йе вертикаљ тăрăх мĕнле полĕ çине ларас тенĕ çав полĕ çине ларма пултарать. d4 полĕ çинчен хĕреспе паллă тунă полĕсем çине, пурин çине те кайма пултарать, сăмахран d7, f4, d1, a4 т. ыт. полесем çине кайма пултарать (тата мĕнле полĕсем çине кайма пултарнине хăвăр тупăр). Хăш фигурă, сăмахран пешкă, çӳрессе пĕр тĕслĕ çӳрет, çинĕ чухне урăхла. Хăш фигурăсем хăйсем çӳренĕ пекех çийеççĕ. Ладйа та çӳренĕ пек çийет.

Ладйа d4 полĕ çинчен h4 полĕ çине каймала пулсан çапла çыраççĕ: Лd4—h4. g7 полĕ çинче (çăлтăрпа паллă

тунă) йут пешкă йе фигурă ларат пулсан, ăна d4 çинче ларакан ладйапа (паллах йут фигурă йе пешкă хăй выранĕнчен сикмест пулсан) икĕ ходрах çиме пулат. Ăна çапла çийеççĕ: малтан Лd4—g4 (ладйа d4 çинчен g4 çине куçат) унтан Лg4 : g7 (g4 çинче ларакан ладйа g7 çинче ларакан йут фигурăна çийет). g7 полĕ патне урăхла та пыма пулат: Лd4—d7 унтан Лd7 : g7. (a7, f5, h2 полĕсем çинче йут фигурăсем лараççĕ пулсан вĕсене мĕнле çимелине туса пăхма хăвăра хушатпăр). Ладйа шуррисен те хурисен те икшер. Вĕсем пурте пĕр йĕркепе çӳреççĕ. Епĕр малала диаграммăсенче йаланах шурă фигурăсене анчах лартатпăр, хура фигурăсене лартмăпăр. Тӳррипе каласан пĕрех вăл, тĕслĕхсенче хут хура фигурăсемпе, хут шурă фигурăсемпе усă кур, мĕншĕн тесен пĕр пек фигурăсем (хурисем те, шуррисем те) пĕр пек çӳреççĕ.

### *Слон*

Слон диагоналҌ тăрăх мĕнле полĕ çине ларас килет çав полĕ çине ларма пултарат.

7.



Хурисен те шуррисен те икĕ слон пуррине епĕр паçăрах пĕлетпĕр (ун çинчен 5-мĕш диаграммăна пăх). Вĕсен пĕр слонĕ хура диагоналҌ тăрăх, тепĕр слонĕ шурă диагоналҌ тăрăх анчах çӳреççĕ. Анчах çакна астăвас пулат, шурă диагоналҌ тăрăх çӳрекен слон нихăçан та хура диагоналҌ çине куçмаст, çавăн пекех—хура диагоналҌ тăрăх çӳрекен слон шурă диагоналҌ çине куçмаст. 7-мĕш диаграммă çинче шурă диагоналҌ тăрăх çӳрекен слон е4

полĕ çинче тăрать, вăл хĕреспе паллă тунă шурă полĕсем çине ларма пултарать, d4 çинче ларакан шурă слон хура диагональ тăрăх çăлтăрпа паллă тунă хура полĕсем çине ларма пултарать. Слон та хăй çӳренĕ пекех çийет. Сăмахран, g7 çинче йут фигурă тăрать пулсан, ăна d4 çинче тăракан слон çакăн пек çийет Cd4:g7 йе тата çакăн пек пулнине илĕпĕр. b5 çинче йут фигурă тăрать пулсан, ăна e4 çинче тăракан слон икĕ ходрах çиме пултарать: Ce4—d3, кайран Cd3:b5; йе Ce4—c6, кайран Cc6:b5 çийет. (Куна хăма çинче хăвăр та туса пăхăр).

### *Ферзĕ*

Ферзĕ горизонталь тăрăх, вертикаль тăрăх тата диагональ тăрăх мĕнле полĕ çине кайас килет çав полĕ çине ларма пултарать. Çапла вара ферзĕ пĕр вăхăтрах ладйа пек те слон пек те çӳреме пултарать. Çакăн пек çӳреме пултарнă пирки вăл ытти фигурăсенчен чи вăйли пулса тăрать. 8-мĕш диаграммăра d5 çинче тăракан ферзĕ кайма пултаракан полĕсене хĕреспе паллă тунă. Çав полĕсем çинче йут фигурă тăрать пулсан ăна вăл çиме пултарать. Хăвăр çакăн пек упражненисем туса пăхăр. Хăвăрăн ферзĕна (шуррине) d3 полĕ çине лартăр, икĕ хура ладйана d6 пе h7 çине тата икĕ хура слона a8-пе h4 çине лартăр.

8.



Шутласа пăхăр-ха халĕ: хура фигурăсем ниçта та сикмеççĕ пулсан, вĕсене миçе ходра ферзĕ çисе пĕтерме пултарать?

## *Король*

Король пур йеннеле те: горизонталь, диагональ, вертикаль тăрăх йунашар тăракан полĕсем çине кайма пултарать. Çийессе те йунашар ларакан полĕ çинче тăракан йут фигурăсене çеç çиме пултарать. Шахмăт вăййинче король пĕртен пĕр паллă фигурă. Ăна, правилă тăрăх, нимле фигурă та çиме пултараймасть. Вăл йут фигурă кайма йе çиме пултарнă полĕ çине кайма пултараймасть. Король тата пешкă çиме пултаракан полĕ çине кайма пултараймасть, анчах пешкă сикес вырăна кайма пултарать.

9. 

9-мĕш диаграммă çинче король кайма пултарнă полĕсене хĕреспе паллă тунă. Анчах та, сăмахран с5 йе е4 полĕсене хура ладйа йе урăх фигурăсем хăратса тăраççĕ пулсан (вăл полĕсем çине хура фигурăсем кайма пултараççĕ пулсан), шурă король вăл полĕсем çине кайма пултараймасть. Çавăн пекех хăма çинче икĕ король (шурри тата хури) анчах йулчĕç пулсан, вĕсем пĕр-пĕрин çумне пырса йунашар тăма пултараймаççĕ. 10-мĕш диаграммăра пирĕн умра икĕ король. Вĕсем хăма çинче пур çĕре те кайма пултараççĕ пулсан та, пĕр-пĕрин çумне, йунашар пырса тăма пултараймаççĕ. Çапла вара d4 çинче тăракан шурă король с3, с4, с5, d3, d5 тата е3 çине кайма пултарать, анчах е4 пе е5 çине кайма пултараймасть. Çавăн пекех, f5 çинче ларакан хура король g4, g5, g6, f4, f6 тата е6 çине кайма пултарать, анчах е4-пе е5 çине шурă

10. 

корољ хăратса тăракан полĕсем çине, кайма пултараймаст̆. Кун хыççăн çакăн пек правилăна астăвăпăр: йут фигурăсем кайма пултарнă полĕсем çине йе пешкăсем çиме пултарнă полĕсем çине корољ кайма пултараймаст̆.

Кунтан çакăн пек вывăд тума пулат̆: корољ тепĕр фигурăпа хÿтĕленсе тăракан йут фигурăна çиме пултараймаст̆. Сăмахран, шурă корољ g3 çинче тăрат̆ пултăр, хурисен пешки g4 çинче, слон c8 çинче тăраççĕ, тейĕпĕр. Корољ пешкăна çиме пултараймаст̆, мĕншĕн тесессĕн корољ пешкăна çинĕ хыççăн, вăл слон сикме пултарнă полĕ çинче пулма пултарат̆, правилă тăрăх корољăн кун пек тума йурамаст̆ (куна хăма çинче туса пăхăр).

*Лаша*

Лаша (коњ) пĕр полĕ урлă, полĕ тĕсне улăштарса, пур йеннеле те çÿреме пултарат̆: шурă полĕ çинчен хура полĕ çине, хура полĕ çинчен шурă полĕ çине çÿрет. 11-мĕш диаграммă çинче, e5 çинче тăракан лаша кайма пултарнă полĕсене хĕреспе паллă тунă. Халĕ ĕнтĕ лашана c3 йе e6 çине лартса вăл мĕнле полĕсем çине кайнине шутласа пăхăр.

Епĕр малта, фигурăсем çÿренине вĕреннĕ чухне, пĕр фигурă тепĕр фигурă урлă каçса çÿреме пултараймаст̆ тенĕччĕ, анчах та лаша кун пек правилăна пăхăнмаст̆. Мĕншĕн тесен вăл хăй сикнĕ чухне йунашар ларакан полĕсем урлă, ун çинче фигурă ларат̆ пул-

11. 

сан та, каçма пултарать. Çапла вара, лаша хуть те мӗнле фигурӑ урлӑ та каçса çӳреме пултарать. Лаша та, ытти фигурӑсем пекех, хӑй тӗслӗ фигурӑсем вырӑнне ларма, вӗсене çиме пултараймасть.

Лаша мӗнле сиксе çӳренипе 12-мӗш диаграммӑ тӑрӑх паллашӑпӑр.

12. 

12-мӗш диаграммӑ çинче икӗ шурӑ тата пӗр хура лаша тӑраççӗ (ытти фигурӑсен тӗслӗхӗсене халӗ кунта пӑхмӑпӑр). g1 çинче тӑракан шурӑ лаша ниçта та сикме пултарайман пек курӑнать, анчах вӑл, фигурӑсем урлӑ каçма пултарнӑ пирки, чиперех фигурӑсем ларакан полӗсем урлӑ каçса f3 йе h3 полӗ çине кайма пултарать. Вӑл е2 çине кайма пултараймасть, мӗншӗн тесен унта хӑй тӗслӗ фигурӑ (лаша) ларать. Лаша та çинӗ чухне хӑй сиксе çӳренӗ пек çийет. 12-мӗш диаграммӑ çинче е2 çинче ларакан лаша f4 пешкӑна илсе ун вырӑнне ларма пул-

тарать (тĕрĕсрех каласан, „çийет“). Хурисемпе вылЂакан та хăйсен ход пулсассăн e6 çинче ларакан лашапа f4 çинче ларакан шурă лашана илсе, ун вырăнне ларма пултарать. ХалЂ тунă ходсене (çинине) çапла çыраççĕ: Ке2 :f4, Ке6 :f4

Çакна асăрхаса хăварăпăр: лашасем хăйсем урăх тĕслĕ полĕ çине куçрĕç. Лаша сикнĕ чухне йаланах çавăн пек пулса пырать.

*Пешкă*

Пешкă шахмăт хăми çинче пуринчен те йӳнĕ фигура. Вăл сикнĕ чухне йаланах малала, пĕр полĕ çинчен тепĕр полĕ çине шăвать. Анчах пешкăн çакăн пек правилă пур: малтанхи вырăнĕнче ларакан пешкăпа (шуррисем 2-мĕш горизонталЂ çинче, хурисем 7-мĕш горизонталЂ çинче лараççĕ пулсан) тӳрех пĕр полĕ урлă сикме пултараççĕ. ВылЂакан хăй ирĕкĕпе ун пек сикме те, сикмесен те пултарать.

13.


13-мĕш диаграммă çинче тăвата шурă пешкă, тата тăвата хура пешкă куратпăр (ытти фигурăсене кунта шута ан илĕр). Шурă пешкăсем айалтан çӳлеле, хурисем—çӳлтен айалала кайаççĕ) вĕсем мĕнле кайма пултарнине стрелкăпа палăртнă). Тепĕр тĕслĕ каласан, пешкăсем пĕр полĕ çинчен тепĕр полĕ çине куçса пĕр вылЂакан патĕнчен тепĕр вылЂаканĕ патнеле кайаççĕ. Анчах, сăмахран, c2 çинче ларакан шурă пешкă (вăл малтанхи вырăнта ларнине—2-мĕш горизонталЂ çинче ларнине пĕлетпĕр). Çавăнпа та вăл правилă тăрăх c2—c3 çине анчах мар, тӳрех c2—c4 сикме пултарать. Çавăн пекех h7 çинче ларакан хура пешкă h7—h6 çине анчах

мар, тӳрех h7—h5 ҫине кайма пултарать. Ҫинӗ чухне пешкӑ ытти фигурӑсем пек ҫимест: Сикнӗ чухне малала сикет, ҫинӗ чухне айккинеле (диагональ тӑрӑх) йунашар тӑракан полӗ ҫинчи фигурӑна ҫийет. Тӗрӗсрех каласан; ҫинӗ чухне пешкӑ хӑй мӗн тӗслӗ полӗ ҫинче ларать, ҫав тӗслӗ кӳршӗри полӗ ҫинче (диагональ тӑрӑх) ларакан йут фигурӑна ҫиме пултарать.

13-мӗш диаграммӑ ҫинчи пешкӑсене тепӗр хут пӑхса тухӑпӑр. Пешкӑ f4 мӗн тума пултарать-ха? Вӑл малала тепӗр полӗ ҫине (f4—f5) кайма пултарать, анчах ун пек сикес вырӑнне вӑл йе ладйана (f4 : e5) йе лашана (f4 : g5) ҫиме пултарать. Ҫакна та астӑвӑпӑр: пӗр пешкӑ пӗр вӑхӑтрах икӗ фигурӑна ҫимеле ларнине вилкӑ теҫҫӗ. Малала, c2 пешкӑ мӗн тума пултарать-ха тата? Вӑл d3 пешкӑна ҫиме пултарать (c2 : d3) йе тепӗр полӗ ҫине (c2—c3), йе тӳрех пӗр полӗ урлӑ (c2—c4) кайма пултарать. Шурӑ пешкӑ c2—c4 сиксессӗн b4 ҫинче тӑракан хура пешкӑ хӑй ҫумӗнчен иртсе кайакан шурӑ пешкӑна ҫиме пултарать, вӑл ҫапла ҫийет—b4 : c3 (шурӑ пешкӑ c3 ҫинче тӑнӑ пек). Кун пек, йунашар иртсе кайнӑ чухне, пешкӑн ҫитес ходрах ҫийес пулать, пӗр ход иртсен ҫиме йурамасть. Кун пек йӗрке пешкӑсемшӗн кӑна. Ку правилӑна малтанах вӗренсе хӑнӑхас пулать. Тата ҫакна манас пулмасть: йунашар иртсе кайнӑ чухне йаланах ҫиме кирлӗ мар (выљакан хӑй ирӗкӗпе ҫийет).

Пешкӑ начар фигурӑ пулин те, вӑл йалан сиксе хӑман тепӗр вӗҫне тухса, тӗрлӗ фигурӑ пулма пултарать (король анчах пулма пултараймасть). Пешкӑ хӑма хӗрне тухсан (шуррисем 8-мӗш ӗрете, хурисем 1-мӗш ӗрете) выљакан хӑй ирӗкӗпе вӑл пешкӑна мӗнле фигурӑпа та пулсан улӑштарма пултарать, вӑйӑ йӗрки тӑрӑх ӑна улӑштармалах. Чӑнахах та ӗнтӗ, пешкӑран ферзӗ туни авантарах, мӗншӗн тесен ферзӗ пур фигурӑран та вӑйлӑ фигурӑ (ҫавӑнпа та кун пек тунине „пешкӑ ферзӗна тухать" теме йышӑннӑ). Хӑш чухне пешкӑна лашапа, слонпа, ладйапа улӑштарни усӑлӑ пулать. 13-мӗш диаграммӑ ҫинче шуррисем хӑйсем сикмеле чухне a7 пешкӑна a8 ҫине куҫарса, ун вырӑнне ферзӗ лартма пултараҫҫӗ. Кун пек тунине ҫапла ҫыраҫҫӗ: a7—a8Ф.

Ҫавӑн пекех хурисем те хӑйсем сикмеле чухне g2

пешкăна g1 çине куçарса ун вырăнне ферзĕ йе урăх фигурă лартма пултараççĕ. Пешкă çакăн пек пулма пултарнине çапла çыраççĕ:

g2—g1Ф, g1К, g2—g1С, g2—g1Л.

Каланисенчен çаксене кĕскен астăвăпăр:

1. Пешкă пĕр полĕ çинчен тепĕр полĕ çине, малтанхи вырăнтан пĕр полĕ урлă м а л а л а кайма пултарать.

2. Пешкă ч а л ă ш ш ă н йунашар тăракан клеткă çинчи йут фигурăна çийет.

3. Пешкă çумĕнчен йут пешкă, вăл çиме пултаракан полĕ урлă каçсассăн, ăна çав вăхăтрах хăйсен сикмеле чухне çийет.

4. Пешкă йулашки йĕрете тухсан, пур фигурă та пулма пултарать, пĕр король çех пулаймасть.

Пешкăсем хăма çинче тĕрлĕ йĕркепе ларса тухма пултараççĕ. Кашни йĕркен хăйĕн йачĕ пур. Вăл йатсемпе пирĕн малала тĕл пулмала пулать, çавăнпа та вĕсене кунта палăртса хăварăпăр.

14. 

d-пе е линисем (вертикальсем) çинче ларакан пешкăсене ц е н т ă р т а л а р а к а н (в а р р и н ч и) п е ш к ă с е м теççĕ (14-мĕш диаграммăна пăх), а-па h линисем (вертикальсем) çинче ларакан пешкăсене а й а к к и н ч и п е ш к ă с е м теççĕ. Т у х с а к а й а к а н п е ш к ă тесе хăйсем сикнĕ чухне йут пешкăсемпе чарăнса тăман пешкăсене калаççĕ (шурă пешкă d6 тата хура пешкă f6).

Пĕр пешкă умĕнче йут пешкă тăрать пулсан, ун йышши пешкăсене х у п ă н с а л а р н а йе х у п с а л а р т н ă пешкă теççĕ (шурă пешкă е5, хура пешкă с6). Выльанă чухне пĕр тĕслĕ темиçе пешкă пĕр вертикаль çине лекме

пултараççĕ. Ун йышши пешкăсене иккĕленнĕ пешкă (икĕ пешкă умлă-хыçлă тăрат пулсан), йе (виçĕ пешкă умлă-хыçлă тăрат пулсан) виççĕлетнĕ пешкăсем, теççĕ (14-мĕш диаграммă çинче c5 пешкăпа c6 пешкăсем иккĕлетнĕ пешкăсем пулаççĕ). Пĕр пешкă тепĕр пешкăна хӳтĕлесе тăрат пулсан, ăна сыхăнтарнă (йе пĕрлешнĕ) пешкăсем, теççĕ (Диаграммă çинче d6-пе e5, e6-пе f5). Çапла тăни питĕ аван, мĕншĕн тесен пĕр пешкă тепĕр пешкăна хӳтĕлесе тăрса, йут фигурăсене йе королья çиме памаст. Нумай пешкă çакăн пек сыхăнса ларнине пешкăсен цепĕ, теççĕ. Хăш чухне пĕр пешкă пĕчченех тăрса йулма пултарат. Пĕччен тăрса йулнă пешкă тесе хăй тĕслĕ пешкăсемпе сыхланма пултарайман пешкăсене калаççĕ (вăл пешкă тăракан вертикальпа йунашар тăракан вертикальсем çинче çав тĕслĕ пешкăсем тăмаççĕ пулсан). 14-мĕш диаграммă çинче d6-пе e5 тата e6-пе f5 пешкăсем кăна сыхăнса тăраççĕ, ытти пешкăсем пурте пĕччен тăракан пешкăсем.

Халĕ ĕнтĕ епĕр фигурăсемпе тата вĕсем мĕнле çӳренипе паллашрăмăр. Малала вĕренме тытăниччен малтан мĕн чухлĕ ăнланнине пăхса тухăпăр, çавăнпа та çак ыйтусене ответлĕпĕр.

## ЫЙТУСЕМ:

1) Пур пешкăпа фигурăсене хăма çине хăйсен йĕркипе (выльас умĕн лартмала пек) лартса тухăр та, шахмăт потацийĕпе усă курса, вĕсем тăракан полĕсен йачĕсене каласа тухăр.

2) Шахмăт хăми кĕтессинче тăракан шурă полĕ выльакантан хăш йенче пулмала?

3) Вăйăна малтан камсем пуçласа йараççĕ, шуррисем йе хурисем?

4) Фигурăсене йаланах çини (çапса илни) усăлă-и?

5) Фигурăсемпе пешкăсем çӳрени хушшинче мĕнле пысăк уйрăмлăх пур?

6) Мĕнле çӳреççĕ ладйа, слон, ферзĕ, королъ, лаша?

7) Пешкăсем мĕнле çӳреççĕ тата мĕнле çийеççĕ? Тĕслĕхсем тупса пăхăр.

8) Мĕн вăл „çул çинче" çини? Тĕслĕхсем тупса пăхăр.

9) Мĕн вăл пешкăна урăх фигурăпа улăштарни? Йаланах улăштарма йурат-и?

10) Королъа çиме йурат-и?

11) Ходсене мĕнле çыраççĕ?

Хăвăр ответăрсене „ответсем" тенĕ пайра çырни тăрăх тĕрĕслеме пултаратăр (кĕнеке хыçĕнчерехре пичетленнĕ).

## *Рокировкӑ. Шах.*

Епӗр пӑхса тухнӑ ходсемсӗр пуҫне тата хутлавлӑ (сложный) ход пур, вӑл ход икӗ фигурӑна сиктерсен пулат̆. Вӑл ходра икӗ фигурӑ сикет пулсан та ӑна пӗр ход вырӑнне шутлаҫҫӗ. Кашни выљакан пӗр парти выљанӑ хушӑра пӗр хут, пӗр вӑхӑтрах корољпа та ладйапа та сикме пултарат̆, ҫавна вара рокировкӑ теҫҫӗ.

15.



15-мӗш диаграммӑ ҫинче кӑтартнӑ шуррисем те хурисем те рокировкӑ икӗ тӗслӗ тума пултараҫҫӗ, мӗншӗн тесен корољпа ладйа хушшинче нимӗнле фигурӑ та тӑмаст̆. Рокировкӑ вӑрӑмми тата кӗски пулат̆.

16.



17.



Вӑрӑм рокировкӑ тунӑ чухне корољтен ферзӗ йенче тӑракан ладйана корољпа йунашар (шуррисемшӗн сулахай

йенчен, хурисемшĕн сылтăм йенчен) илсе пырса ĕлĕк ферзĕ ларнă вырăна лартмала, кайран короља ладйан тепĕр йенне, унпа йунашар каçарса лартмала.

Кĕске рокировкă тунă чухне шуррисемшĕн корољран сылтăм йенче, хурисемшĕн корољран сулахай йенче ларакан ладйана корољпа йунашар хăй ларакан йенне лартмала, кайран короља ладйапа йунашар, ладйан тепĕр йенне лартмала. Вăрăм рокировкăпа кĕске рокировкă хурисемшĕн мĕнле пулмалине 16 диаграммă çинче кăтартнă, шуррисемшĕн—17 диаграммă çинче кăтартнă. Кунта çакна асăрхама йăвăр мар, корољсемпе ладйасем те çĕнĕ выранта та пĕр-пĕрне хире-хирĕç лараççĕ. Рокировкă тунине çапла çыраççĕ: вăрăм рокировкăна О—О—О, кĕске рокировкăна —О—О паллă тăваççĕ.

Рокировкă туни икĕ йенчен аван: корољ хӳтĕ вырăна куçса ларать (вăл центăрта ларса хытă выљама кансĕрлесе ларма пултарать) тата ладйа вăййа тухать.

Выљама вĕренекенсенчен нумайĕшĕ рокировкă уссине пĕлмеççĕ. Вĕсем, хăйсен корољне центра хăварса **хирĕç выљакана хĕстерме** йуратаççĕ, çавăн пирки те вĕсем час-часах парăнаççĕ. Йаланах хирĕç выљакана хĕстерме кăна мар, тата хăвăн мĕнле хӳтĕленмели çинчен те шухăшлас пулать. Кун пек тумасассăн епĕр нихăçан та шахмăтла лайăх выљама вĕренейрес çук.

Хăш чухне, ладйапа корољ хушшинче нимĕнле фигурă лармаст пулсан та, рокировкă тума йурамаст. Халĕ ĕнтĕ хăçан **рокировкă тума йураманнине** пăхса тухăпăр:

1) Корољ йе ладйа хăйсен малтанхи вырăнĕнчен сикнĕ пулсан, кайран хăйсен вырăнне пырса ларнă пулсассăн та, рокировкă тума йурамаст;

2) Короља шах панă пулсан. Шахран рокировкă туса хăтăлма йурамаст;

3) Рокировкă тунă хыççăн короља шах пулать пулсан;

4) Рокировкă тунă чухне корољăн йут фигурăсем (йе пешкăсем) хӳтерсе тăракан полĕ урлă каçмала пулсан рокировкă тума йурамаст.

18-мĕш диаграммă çинче шуррисем кĕске рокировкă тума пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен, рокировкă тунă хыççăн корољăн g1 çинче лармала, анчах ку полĕне h2 çинче ларакан хура пешкă хӳтерсе ларать. Вĕсем çакă ладйан g6 çинче ларакан хура слон хӳтерсе тăракан полĕ урлă

18. 

(b1) каçса каймала пулсан та, вăрăм рокировкă тума пултараççĕ. Кун хыççăн çакна каламала: йут фигурăсем йе пешкăсем хӳтерсе тăракан полĕ урлă рокировкă тунă чухне, ладйа каçма пултарать. Хурисем 18-мĕш диаграммă çинче рокировкă тăваймаççĕ. Кĕске рокировкă тума d5 çинче ларакан шурă слон кансĕрлет (3-мĕш пунктра ун çинчен каланă), вăрăм рокировкă тума b7 çинче ларакан шурă лаша кансĕрлет (кун çинчен 4-мĕш пунктра каланăччĕ).

Тата çакăн çинчен асăрхамала: выљанă вăхăтра рокировкă тума пултарайман майсем темĕн чухлех, çавăнпа та выљама вĕренекенĕн выљама пуçласанах королља хӳтĕлесси çинчен шухăшламала. Хăш чухне кăна, хирĕççисен партине çĕмĕрме васкамала пулсан (партине выљаса илмели ходсем пулсан), королља хăй вырăнĕнчех хăварма йурать. Кун пек чухне пĕр ытлашши ход та (кирлĕ мар ход) тума йурамасть. Каланисенчен çакăн пек вывăд пулса тăрать. Хирĕç выљакан королља рокировкă тума чарнине çитĕнӳ теме йурать, мĕншĕн тесен ун пек тусан, хирĕç выљакана, королља хӳтĕлесси çинчен шухăшлаттарать. Кун пек тăвас пулсан, хирĕç выљаканăн королљне малтанхи вырăнĕнчен сиктерме тăрăшас пулать.

Королља „çапса илме“, йут фигурăсем йе пешкăсем хӳтерсе тăракан полĕсем çине королљ ларма пултараймасть тесе епĕр маларахрах каланăччĕ. Çавăн пиркийех, хӳтĕленсе тăракан йут фигурăна королљ çиме пултараймасть. Королља йалан хĕстерсе пыра пуçласан мĕн тумала-ха? Выљакансенчен пĕри йут королља хăйĕн фигурипе йе пешкăпа çимеле лартнине ш а х теççĕ („Королља шах“ тесе хыттăнах каламала, шах тени „королља çиме пул-

таратăп“ тенине пĕлтерет). Короља шах пулсассăн корољăн шахран хăвăртрах (çитес ходрах) хўтĕленес пулат, короља шах çинче хăварма йурамаст. Шахран хăтăлмали майсем нумай. Малтанах, шах панă полĕ çинчен йут фигурăсем хăратса тăман полĕ çине кайма йурат. Хăш чухне шах паракан фигурăна çиме пулат. Тата, шах паракан фигурăпа корољ хушшине фигурă йе пешкă лартса шахран хăтăлма пулат. Шахран хăтăлмали çак майсемпе усă курасси выљакан ирĕкĕнчен килет. Хăш чухне корољăн пĕртен пĕр ход йулат, кун пек чухне çак майсем çинчен шухăшлама кирлĕ те мар.

19 диаграммă çинче выљакансем çўресе тĕрлĕ майпа шах пама пултарнине кăтартнă. Кунтах астуса хăварăпăр, шах панине + (хушас паллăпа) çыраççе. Шуррисем хурисене çакăн пек шахсем пама пултараççĕ: 1) ферзĕпе çапла шах памала — Фс2 — с6 +, йе Фс2 — b2 +, йе Фс2 — с3 +; 2) иккĕлĕ шах (кунта ладйапа слон тăваççĕ). Вăл Сf2 — d4 + пулат, 3) у ç ă шах, вăл çакăн пек чухне пулат. Сăмахран, слон f2 çинчен урăх — е1, g3, h4, g1, b6 т. ыт. полĕ çине кайса, f1 çинче тăракан ладйапа хура короља шах памала уçсан. Сf2 — d4 + кайса шах пани у ç ă шах та и к к ĕ л ĕ шах та пулат, слон урăх полĕ çине кайсан у ç ă ш а х кăна пулат. Хурисем те хăйсем йенчен çакăн пек шахсем пама пултараççĕ: 1) ферзĕпе Фh2 — h3 + йе Фh2 — d6 +; тата çапла шах пама йурат — Фh2 — g3 анчах кунта шурă слон çисе йама пултарат, фигурăна ахаљ пама никам та килĕшес çук, çавăнпа та кун пек шах пама кирлĕ мар. 2) лашапа Кg6 — f4 + йе Кg6 — е5 + тата 3) уçă шах: b5 — b6 (халĕ слон а6 шах парат).

19.



Лашапа шах парсан короЂ унтан, унпа хăй хушшине фигурă лартса, хăтăлма пултараймасť (мĕншĕн тесен лаша пур фигурă урлă та сиксе çӳрет). Çавăнпа та лаша шах парсан короЂăн йаланах йе урăх полĕ çине куçмала йе (çиме май килсен) лашине çисе йамала. Иккĕлĕ шах чухне икĕ шах паракан фигурăран вĕсемпе хăй хушшине фигурă лартса хăтăлаймасť, кунта (лашапа шах панă чухнехи пекех) короЂăн йаланах урăх полĕ çине куçмала. Ытти шахсенчен фигурăпа хӳтĕленме пулаť. Сăмахран: шуррисем Фс2—с6+ шах парсан, хурисем Фh2—d6+ сиксе, пĕр вăхăтрах шуррисене шах парса, шахран хăтăлаççĕ, йе тата е7—е6 пешкăпа сиксе шахран хăтăлма пултараççĕ. Фс2—b2+ шах парсан, хурисем Kg6—e5+ сиксе пĕр вăхăтрах шах та параççĕ, шахран та хăтăлаççĕ.

Ы Й Т У С Е М

12) Мĕнле хода рокировкă теççĕ? Ăна мĕнле паллă тăваççĕ?

13) Хăçан рокировкă тума йурамасť? КороЂпа ладйа хушшинче фигурă тăмасť пулсан та, рокировкă тума йураманни (4 условине те каласа парăр).

14) КороЂ йе ладйа йут фигурăсем хӳтерсе тăракан полĕ урлă каçма пултараť и?

15) Мĕн параť рокировкă?

16) Мĕскер вăл „шах"?

17) Шахран мĕнле хăтăлмалине 3 майне те кăтартăр.

18) Иккĕлĕ йе усă шах пулакан тĕслĕхсем туса пăхăр.

### *Фигурăсен тата пешкăсен вăйĕ. — Партине çырса пыни.*

Фигурăсем тата пешкăсем мĕнле çӳренине пăхса тухрăмăр, анчах вĕсен хакĕсене пĕлместпĕр-ха. Ферзĕна пешкăпа, лашана ладйапа, икĕ слона Ферзĕпе улăштарма йураť-ши? Малта каланине ăнланнă хыççăн вулакан умĕнче çакăн пек ыйту тăма пултараť. Тепĕр тĕслĕ каласан, фигурăсем пĕр-пĕрне мĕнле çинине пĕлнĕ хыççăн, мĕншĕн тата хăçан çисен усă пулнине пĕлес килет. Вăл çапла пулмала, пирĕн вăй (материал) хирĕççисемпе танлаштарсан мĕн чухлĕ нумайрах, партине выЂаса илес шанчăк та пирĕн çавăн чухлĕ пысăкрах пулмала. „Материал" тесе выЂаканăн пешкисемпе фигурисене калаççĕ.

Фигурăн хакĕ йе вăйĕ вăл хăма çинче мĕнле çӳреме пултарнинчен килет. 6, 7, 8, 9, 11 диаграммăсене танлаштарсассăн акă мĕн палăртма пултаратпăр. (Вăл диаграммăсем çинче епĕр ладйа, слон, ферзĕ, король, лаша кайма пултарнă полĕсене хĕреспе паллă тунăччĕ). Ферзĕ кайма пултарнă полĕсене ытти фигурăсем кайма пултарнă полĕсемпе танлаштарсассăн, вăл ытти фигурăсенчен нумайрах полĕ çине кайма пултарнине куратпăр. Фигурăсен хакне чи начар фигурăпа—пешкăпа танлаштараççĕ.

Ăна çапла кăтартма пулат:

Слон — лаша хакне йе 3 пешкă хакне тăма пултарат. Ладйа 5 пешкă хакне тăрат.

Ферзĕ икĕ ладйа хакне йе 10 пешкă хакне тăма пултарат.

Çаксене пĕлнĕ хыççăн епĕр фигурăсен хакне урăхла та шутлама пултаратпăр. Сăмахран: ладйа—пĕр слон (йе лаша) тата 2 пешкă хакĕсене тăрат, ферзĕ—икĕ слон, лаша тата пĕр пешкă хакĕсене тăрат.

Çапла вара чи вăйлă фигурă ферзĕ пулса тăрат, унтан ладйа, слон йе лаша, йулашкинчен пешкă, ку чи вăйсăр фигурă пулат. Слонпа лашана „çăмăл фигурăсем" теççĕ, ферзĕпа ладйана „йăвăр, вăйлă фигурăсем" теççĕ. Фигурăсен хакĕсене пĕлнĕ хыççăн, мĕнле фигурăна мĕнле фигурăпа улăштарсан усă пулассине тӳрех калама пултаратпăр. Чăнахах та ĕнтĕ, ферзĕна ладйашăн, йе слоншăн йе лашашăн йе тата пешкăшăн пани пĕрре те усăлă мар. Анчах, ферзĕна икĕ ладйашăн, слона лашашăн, пешкăна пешкăшĕн, ладйана слонпа икĕ пешкăшĕн пама йурат. Хăшпĕр выљакансем ферзĕна пешкăпа йе тата ытти йӳнĕ фигурăпа улăштараççĕ. Кун пек выљакансем хăйсемшĕн усăлă пулсан малтанхи ходсенчех ферзĕна илекен мат памали майсем тупсан анчах тăваççĕ. Тĕрĕссипе каласан, фигурăсен вăйĕсене епĕр хамăр выљанă чухне кăна лайăх сисетпĕр.

Ладйа вăйĕпе слон (йе лаша) вăйĕ хушшинче уйрăмлăха качĕствă теççĕ. Сăмахран выљакансенчен пĕри хăйĕн слонне йе лашине ладйапа улăштарсан ăна „качĕствă выљаса илчĕ" теççĕ. Çавăн пекех ладйапа слона (йе ладйапа лашана) ферзĕпа улăштарсан качĕствă выљаса илеççĕ. Пĕр выљаканăн тепринчен пĕр фигурă йе пĕр пешкă ытларах пулсан, ăна материал йенчен вăйлăрах, теççĕ.

Хăма çинче фигурă çӳренине шахмăт нотацийěпе çырма май пуррине епěр пěлетпěр ěнтě. Партине çырнă чухне кашни хода нумěрлесе пыраççě. Акă çапла:

| | | |
|---|---|---|
| 1. | d2 — d4 | d7 — d5 |
| 2. | c2 — c4 | d5 : c4 |
| 3. | e2 — e4 | e7 — e6 |
| 4. | Cf1 : c4 | Kg8 — f6 |

Сулахай йенче шуррисем ход туса пынине кăтартнă, сылтăм йенче хурисем туса пынă ходсене кăтартнă. Фигурă сикнине çырнă чухне, малтан сикекен фигурă йатне кěскен çырмала (Ф — ферзě, Л — ладйа, С — слон, К — лаша, Кр — король), пешкă сикнине çырнă чухне, тӳрех вăл сикиччен ларнă полě йатне, кайран вăл кайнă поле йатне анчах çыраççě. Урăхла каласан, пешкă сикнě чухне малтан ун йатне кěскен çырмаççě. Партине çакăн пек çырса пырсан мěнле фигурăпа ăçта сикнине тӳрех калама пулаť. Партине çырса пынă чухне ходсене ěрете йе тата хут нумай ан пěттěр, вăхăт нумай ан ирттěр тесе, кěскен çырма пулаť. Çак çӳлте кăтартнă 4 хода пěр ěрете тата кěскен çакăн пек çырма пулаť: 1. d4 d5 2. c4 dc 3. e4 e6 4. C : c4 Kf6 малала та, кунта фигурăсем йе пешкăсем мěнле полě çине кайнине кăна кăтартнă. Çинине те кěскен çырма пулаť, кунта та фигурă малтан тăнă полěне палăртмаççě. Сăмахран Cf1 : c4 çырас вырăнне C : c4 кăна çыраççě. Пешкă çинине урăхла çыраççě, кунта числисене (горизонтальсене) тата пайлас паллăна çырмаççě, сăмахран d5 : c4 çырас вырăнне dc кăна çыраççě йе тата f6 : g7 çырас вырăнне fg анчах çыраççě, b5 : c6 çырас вырăнне bc анчах çыраççě.

Шахмăт çинчен çырнă кěнекесем, журналсем çинче çакăн пек знаксем пур:

0 — 0 — кěске рокировкă
0 — 0 — 0 — вăрăм рокировкă
+ — шах
× — мат
! — лайăх (вăйлă) ход
!! — питě лайăх (питě вăйлă) ход
? — начар ход
?? — питě начар ход
~ — вăйлă та начар та мар ход.

Пешкă çинчен каланă чухне (21 стр.) епĕр *d* пе *e* çинче ларакан пешкăсене центрта ларакан пешкăсем, *a* па *h* лини çинче ларакан пешкăсене хĕрринче (йе айккинче) ларакан пешкăсем тесе палăртса хăварнăччĕ. Халĕ ĕнтĕ „центр“ çинчен тĕплĕнтерех ăнланăпăр.

Шахмăт хăмине a-ран пуçласа d-на çитиччен тата e-рен пуçласа h çитиччен, çӳлтен айалала тӳрĕ линисем туртса, виçĕ пайа пайлатпăр, вара, шуррисене сулахай йенчи, йе хурисене сылтăм йенче тăракан хăман пайне (кунта *a, b, c* вертикалĕсем кĕреççĕ) ферзĕ флангĕ, теççĕ, шуррисене сылтăм йенче, йе хурисене сулахай йенче тăракан хăман пайне (кунта f, g, h вертикалĕсем кĕреççĕ) королĕ флангĕ теççĕ. d4, d5, e5, e4 полĕсенчен тăракан хăман варринчи тăваткăла центр, теççĕ (ăна 20-мĕш диаграммă çинче хура йĕрсемпе туртса паллă тунă). Хăма çинче фигурăсене сиктерсе çӳресен, халĕ епĕр, „королĕ флангĕнчи фигурă“, „ферзĕ флангĕнчи пешкă“, „пешкăсем (йе фигурăсем) центăрта тăраççĕ“ теме пултаратпăр.

Тата çакна астăвăпăр, d2 па d7 пешкăсене ферзĕ пешкисем теççĕ, e2 па e7 пешкăсене королĕ пешкисем теççĕ, пĕрисем ферзĕ вертикалĕ çинче, теприсем королĕ

20.




тăракан вертикалĕ çинче тăраççĕ. Çавăн пекех ытти пешкăсене те çапла калама пулать — (ладйа пешкисем, слон пешкисем, тата ытти те).

### ЫЙТУСЕМ

19) **Фигурă вăйне мĕнле пĕлмеле?**

20) **Хăшĕ вăйлăрах: ферзĕ йе ладйапа слон? Ладйа йе икĕ слон? Лаша йе икĕ пешкă?**

21) Материал йенчен вăйлă тени мĕне пĕлтерет?

22) Шахмăт вайин тăрăх çырнă кĕнекесенче тĕл пулакан знаксене палăртса тухăр.

23) Мĕн вăл „король флангĕ“ тата „ферзĕ флангĕ“ тени?

24) Хăма çинче мĕнле полĕсем центр тăваççĕ?

Ответсене тĕрĕслесе тух.

### *ВĂЙĂ ТĔЛЛЕВĔСЕМПЕ, ШАХМĂТ ПРАВИЛИСЕМ.*

ПАРТИ ПУÇЛАМĂШĔНЧИ МАТСЕМ.

### *1. Мат.*

Кĕнекен малтанхи пайĕсенче епĕр, короЂ палла фигурă пулса тăнă пирки, ун çинчен питех те нумай чарăнса тăнăччĕ. Ун çинчен чăнахах та нумай каламала, мĕншĕн тесен, унсăрăн вăйă пулма пултараймаст. Çавăнпа та, йалан хăвăн короЂна сыхлана хушăра, пĕр вăхăтрах, йут короЂа хĕстерессине манас пулмаст. Çапла вара выЂакан кашнийех йут короЂа „вилĕмрен" хăтăлмала мар çĕре лартма тăрăшать. Тепĕр тĕслĕ каласан, шахмăтла выЂанă чухне хăçан та хăçан выЂакансенчен пĕри йут короЂа шах парса ниçта та каймала мар çĕре лартать, çавна çĕнтернĕ тесе шутлаççĕ. Ку „шах" ахаЂ шах мар, кун пек чухне короЂа „мат пулчĕ" теççĕ. Çакăнпа вара шахмăт партийĕ пĕтет. Мат параканнине çĕнтернĕ тесе шутлаççĕ.

ВыЂама вĕренекене епĕр йут короЂа ниçта та каймала мар çĕре лартма тăрăшмала тетпĕр пулсан, выЂама вĕренекенĕн йалан ун çинчен шухăшлама кирлĕ мар; йут фигурăна çиме пултарсан, ăна çимеле, лайăх вырăн

21. 

22. 

йышăнмали майсем пулсан—йышăнмала. Выԓакан начар ходсем тумасť пулсан, ăна мат пама йăвăр, хăш чухне пама та май килмест. Чылай партисенче парти мат пуличченех пĕтет, вăл выԓакансенчен пĕри питĕ начар йулса, хăйне кĕç-вĕç мат пулассине кура, парăнсан пулаť.

Халĕ епĕр пĕр ходра мат пулакан майсене пăхăпăр.

21-мĕшпе 22-мĕш диаграммăсем çинче мат памали майсем кăтартнă. 21-мĕш диаграммă çинче ладйа мат параť, 22-мĕш диагр. çинче ферзĕ мат параť. Икĕ диаграммă çинче те хура короԓ шахран хăтăлаймасť.

23.


24.


25.


26.


23, 24, 25 тата 26-мĕш диаграммăсем çинче шуррисем хăйсен ходĕнче пĕр ходра мат параççĕ, вăл çапла пулаť: 23. Cc1—h6 мат, 24. Kg5—f7 мат, 25. Cf2—d4 мат (иккĕлĕ шах кайран мат).

26. d6—d7! мат (уçă шах унтан мат).

## *Никам ҫӗнтерменни. Пат.*

Шахмӑт партийӗ йаланах ҫӗнтерӳпе пӗтмест. Хӑш чухне выљакансенчен пӗри те выљаса илме пултараймаҫҫӗ, кун пек чухне вара ҫӗнтерӳ никама та пулмасť. Ҫӗнтерӳ никама та пулманнине кӑтартакан тӗслӗхсенчен лайӑх тӗслӗх—вӑл хӑма ҫинче икӗ корољ анчах йулни. Ӑна епӗр 10-мӗш диаграммӑ ҫинче курнӑччӗ (20-мӗш стр.) Кунта пӗр корољ тепӗр корољ патне йунашар пырса тӑма пултараймасť, ҫавӑнпа та пӗр корољ тепӗр корољ хыҫҫӑн хӑвалани усӑсӑр ӗҫ. Кун пек чухне вара, вӑйӑ йӗрки тӑрӑх, ҫӗнтерӳ никама та пулмарӗ, никам та ҫӗнтереймен тесе шутлаҫҫӗ. Никам та ҫӗнтермен парти пӗрисен фигурӑ ытлашши пулсан та пулаť. Сӑмахран, корољпа слон йе корољпа лаша пӗччен йулнӑ йут короља мат параймаҫҫӗ. Пӗр выљакан теприне пат турӗ пулсан та, партине ҫӗнтерӳ н и к а м а т а пулмарӗ тесе шутлаҫҫӗ. Пӗр выљакан корољпа анчах сикме пултарнӑ чухне (ытти фигурӑсем йе пешкӑсем сикме пултараймасан) хирӗҫ выљаканӗ вӑл короља шах памасӑрах ниҫта та каймала мар туса хучӗ пулсан пат пулаť.

Епӗр пӑхнӑ 24-мӗш диаграммӑ ҫинче (33 стр.) b2 ҫинче ларакан хура пешкӑна ҫисе хурисене сикме хушсан, хурисем ниҫта та сикме пултараймаҫҫӗ. Пешкӑ h7 хупланса ларнӑ, корољ g8-пе h7 полӗсем ҫине кайма пултараймасť: мӗншӗн тесен g8 полӗне h6 ҫине ларакан шурӑ лаша хӑратса тӑраť, h7 ҫине g5 ҫинче ларакан шурӑ лашапа g6 ҫинче ларакан шурӑ пешкӑ хӑратса тӑраҫҫӗ. Ҫапла вара шуррисем хурисене пат турӗҫ, ҫӗнтерӳ никама та пулмарӗ.

Ҫӗнтерӳ никама та пулмала мар тумали тепӗр май пур, вӑл, пӗрисем йаланах шах панӑ пирки (мат пама май килмесен) пулаť. Йалан шах панине те, пат чухнехи пекех, ҫӗнтерӳ никама та пулмарӗ тесе шутлаҫҫӗ.

Хӑшӗсем питӗ начарланса йулнӑ пирки, йалан шах памали майсем шыраҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсем йалан шах парса партине выљаса йарасран хӑтараҫҫӗ. 27-мӗшпе 28-мӗш диаграммӑсем ҫинче йалан шах памали майсене кӑтартнӑ:

27.



28.



1. Kh4—g6+ Kph8—h7
2. Kg6—f8+ Kph7—h8
3. Kf8—g6+ Kph8—h7
4. Kg6—f8+ малала та

1. . . . . . . Лb8—b7
пӗртен-пӗр ход
2. Фf3—f8+ Лb7—b8
3. Фf8—f3+ Лb8—b7
4. Фf3—f8+ малала та
çак ходсем пулаççӗ.

27-мӗш диаграммӑ çинче малтан хурисем сикмеле пулсан, вӗсем шуррисене пӗр ходрах мат параççӗ. 28-мӗш диагр. çинче те çавӑн пекех (вӑл мата хӑвӑр тупса пӑхӑр). Çапла вара, шуррипе выљакан йаланах шах пама пултарайман пулсан унӑн парӑнма тиветчӗ. Çак каланисенчен вӑйӑра камӑн малтан сикесси пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни курӑнаҭ.

### 3. *Мат мӗнле памала?*

Çапла ӗнтӗ, шахмӑтла выљанӑ чухне пӗртен-пӗр задачӑ вӑл—хирӗç выљакана мат парасси. Епӗр ку таранччен пӗр ходра мат памали тӗслӗхсемпе çеç паллашрӑмӑр. Анчах, выљанӑ чухне пӗр ходра мат пама йӑвӑр, мӗншӗн тесен выљакан, мат пулассине сиссе, тӗрлӗ ходсем туса унтан хӑтӑлма пултараҭ. Çавӑнпа та, хирӗç выљакан мат пулассине пӗр йе икӗ ход малтан курсан та мат пулассинчен нимле майпа та хӑтӑлмала мар çӗре лартас пулаҭ. 29, 30, 31 тата 32-мӗш диагр. çинче шуррисем вӑйлӑрах тата хӑма çинче лайӑхрах ларнӑ пирки хурисене икӗ ходра мат параççӗ.

29. 

30. 

1. Сс8—b7+Кра8—а7
2. с7—с8К!×

1. Лf1 : f4 Крg8—h8
2. Лf4—f8×

31. 

32. 

1. f7—f8Ф+Крh 6—h7
2. Фf8—g7×
1. йе Крh8—h5.2.Фf8—h8×

1. Крd4—c3! Крс1—b1
2. Лf1 : d1×

32-мӗш диагр. ҫинче хурисен и р ӗ к с ӗ р е х короӆпа d1 ҫине к а й м а л е к р ӗ, мӗншӗн тесен слонпа ҫӳреме пултараймаҫҫӗ: слон урӑх ҫӗре кайсан короӆа шах пулаӗ. Кун пек пулнине ҫ ы х ӑ н с а л а р н и теҫҫӗ. Ку йулашки тӗслӗхе лайӑх астӑвас пулаӗ, кун пек ҫыхӑнса ларнӑ фигурӑсем выӆанӑ чухне час - часах пулкалаҫҫӗ.

Мат пама икӗ ходра анчах мар, виҫӗ, тӑватӑ тата нумай ходра пама пулаӗ. Анчах, халех шахмӑтла выӆама

вěренекенсене 3 ходра мат памаллине кăтартсассăн вěсем ăна ăнланмасăрах йулма пултараççě. Малтанлăха вěсем м а т пама пěлсен те çитет.

## 4. *Шахмăт правилисем.*

1. Хăма çине пěтěм фигурăсене тата пешкăсене лартса тухсассăн малтан шурă фигурăсемпе выљаканě ход тăвать. Камăн шуррипе, камăн хурипе выљассине пěлме шăпа йараççě. Кайран вара черетленсе пырать. Пěрремěш партире шуррипе выљакан 2-мěш партире хурипе выљать, 3-мěш партире каллех шуррипе, малала та çавăн пек черетленсе пырать.

2. Выљанă чухне кашни выљакан черетěн пěрер ход туса пырать.

3. Выљанă чухне пулма пултарайман ход тусан (правилă каланă пек сикмесессěн) й ă н ă ш а ç а в ă н ч у х н е х т ӳ р л е т м е л е. Выљанă чухне хăма тěрěс ларманнине сиссен (шурă полě сылтăм йенче пулмасан) хăмана тěрěс лартса, партине çěнěрен выљама пуçламала.

4. Выљакан пěр фигурăна полě çинчен илсе тепěр полě çине лартса аллине фигурă çинчен илсен ход тунă тесе шутлаççě. Фигурăна пěр çěртрен илсе тепěр çěре лартсан, анчах аллине фигурă çинчен йамасан, вăл фигурăпа урăх полě çине лартма пултарать. Фигурăна алăпа тěкěнсен, унпа çӳрени усăсăр пулсан та, çав фигурăпах сикмеле. Çавăн пекех, алăпа йут фигурăна тěкěнсен, ăна çини усăсăр пулсан та, ăна хăвăн çиме пултаракан фигурăпа çимеле:

5. Т у н ă х о д а у л ă ш т а р м а й у р а м а с т.

6. Выљаканăн фигурă полě çинче чипер лармасть пулсан, ăна вăл йусама пултарать. Анчах тӳрлетес умěн „т ӳ р л е т е т ě п“ тесе каламала, ун пек каламасассăн çав фигурăпа сикме хушаççě.

7. Пěр выљакан теприне мат начě пулсан, йе пěри „парăнатăп“ терě пулсан, йе çěнтерӳ никама та пулмала мар килнě пулсан (йе пат пирки, йе йалан шах панă пирки) партине пěтнě тесе шутлаççě. Ку правилăна йаланах пăхăнас пулать. Сăмахран, пěр выљакан „парăнатăп“ терě пулсан, кайран, пăртак шухăшласан „тата малала выљас тетěп“ теме йурамасть.

8. Хăш чухне выљакансем пěр фигурăпа йаланах пěр икě виçě полě çинче тапăртатса тăма пултараççě. Кун

пек шуса вёсем партине нихăçан та пĕтереймĕç. Кун пек чухне пĕр выљакан теприне çапла калама пултарать. „Çак ходран пуçласа 50 хода çитеччен есĕ мана йе мат пар, йе ман фигурăна (йе пешкăна) çи, йе пешкăпа çӳре". Çак 50 ход хушшинче кунта каланисене тумасан, çĕнтерӳ никама та пулмасть. Çак 50 ход хушшинче йе фигурăпа çисен, йе пешкăпа сикрĕ пулсан 50 хода шутлама çак ходран пуçлаççĕ.

9. Выљана вăхăтра, тумали ход çинчен шухăшлана чухне кăтартма, йе шахмăт клеткисене тĕкĕнме йурамасть. Çавăн пекех, выљакана чăрмантарма, ун патĕнче хыттăн калаçма йурамасть. Шавлама йураманни, йĕркене пăхăнни—шахмăт вăййинче пит те кирлĕ условисем.

10. Выљакансем хушшинче шахмăт пирки тавлашу пулсассăн, çавăн чухнех выљама пăрахса партине çырса илес пулать, кайран йе пĕлекен шахматисран йе шахмăт организацийĕнчен ыйтса пĕлес пулать.

## *Вăйă мĕнле пырать?*

(*Упражненнисем*)

Епĕр малта каланисене тĕплĕн ăнланса çитсен, выљама вĕренекен хăй тĕлĕн шахмăтла выљама пултарать. Чăнах та ĕнтĕ, кĕнеке çинче пĕлнипе пурнăçра туса пăхасси пĕр мар. Вăл шахмăт вăййинче те çавăн пекех. Шахмăт хăми çине пĕтĕм фигурăпа пешкăсене лартса тухсан, хăш пĕшкăпа йе фигурăпа сиксен аван пулассине выљама вĕренекен час-часах пĕлеймест. Вăл, пешкăсемпе темиçе ход тусан, вăл ход нимĕн те паманнипе хăй те сисет. Кайран вара вăйлă фигурăсемпе сикме пуçлать. Выљама вĕренекенсем ферзĕпе çӳреме питĕ йуратаççĕ. Пĕр полĕ çинчен тепĕр полĕ çине сикет, анчах кун пек çӳренин уссийĕ питĕ сахал. Çапла çӳресех вĕсем ферзĕна час-часах ахалех парса йараççĕ.

### Партине мĕнле пуçламала-ха?

*Малтанхи* ходсене пешкăсемпе, кайран лашапа, слонпа тухсан аван. Кайран вара ху шухăшласа тупнă плана пурнăçа кĕртме пултаракан ходсем тума тăрăшас пулать. Çав вăхăтра йут фигурăна çимели май пулсан, ăна хăвăн планна пăрахсах çимеле. Анчах, кун пек чухне хытă сыхланмала. Выљакан хăй фигурине йурийех çитерсе

мат пама пултарать. Кун пек чухне ваттисем „çичĕ хут виç те пĕр хут кас" тенине манас пулмасть.

Выљама вĕренекенсем выљама пуçласанах хирĕç выљакана темиçе ход тунă хыççан мат пама тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах хăйсем, питĕ начар положенине лексе, параççĕ. Выљанă чухне васкама йурамасть, ху шухăшланă плана пурнăçланă вăхăтрах, хирĕç выљакан мĕн тума шухăшланине сисес пулать. Хирĕç выљакан та сан пекех кашни хода шухăшласа сиксе хăйĕн планне пурнăçлама тăрăшать. Унăн та план пур вĕт. Шахмăтра ху мĕн тăвассине анчах мар тата хирĕçси мĕн тунине пĕлес пулать.

Кунта икĕ тĕслĕхре епĕр парти пуçламăшĕнче фигурăсемпе тата пешкăсемпе ăçта сикмелине пăхăпăр.

Малтан шуррисем ход тăваççĕ.

1. e2—e4 . . . . .

Тата 1. d2—d4 кайма йуранă. Хĕрĕнчи пешкăсемпе a2—a4 йе h2—h4 пешкăсемпе малтан сикме хушмаççĕ. Мĕншĕн тесен, выљанă чухне малтан, вăйă центăрта пулать. Çавăнпа та партине пуçланă чухне фигурăсене тата пешкăсене центр çывăхнерех лартма тăрăшмала. Кунсăр пуçне тата епĕр 1. e2—e4 сиксе слонпа ферзĕна çул уçса паратпăр.

1. . . . . . . e7—e5 . . .

1. . . . e7—e5 сикме йуранă, кайран d7—d5 сикме.

2. Кg1—f3 . . . .

Мĕншĕн 2. Кg1—h3? мар-ха? Мĕншĕн тесен f3 çинче тăракан лаша центр патнерех тăрать. f3 çинчен вăл 8 полĕ çине кайма пултарать, h3 çинчен 4 полĕ çине кăна çитменнине тата çак тăватă полĕрен иккĕшĕ хăйсен йенче (g1 тата f2) f3 çинче ларакан лаша тата e5 çинче ларакан хура пешкăна çимеле ларать.

2. . . . . Кb8—c6

Пĕр вăхăтрах фигурăсене çул уçса тата пешкăна сыхласа.

3. Сf1—c4 . . .

Кунта слон лайăх вырăнта („позицире") ларать. b5 çине кайсан та начар мар.

3. . . . . Сf8 - c5
4. d2—d3 d7 – d5

Çак ходсене тусан „король“ пешкисем çирĕпленеççĕ тата слонсем валли çул уçăлать.

5. 0—0 . . . . .

Короля шанчăклă (хăрушă мар) вырăна лартас тесе тата ладйана вăййа кăларас тесе рокировка турĕç.

5. . . . . Сс8—g4

Хурисем слона кăларса шуррисен лашине çыхăнтарса лартаççĕ. Шуррисем лашапа çÿреме пултараймаççĕ; лашана илсенех хура слон шурă ферзĕна çийет.

6. Сс1—е3 . . . . .

Шуррисем слонсене улăштарса, кайран f линине уçасшăн.

Ку ход тата хура лашана с6 çинчен d4 çине пыма чарать.

6. . . . . Сс5—b6

Хурисем слонпа улăшма килĕшмерĕç, хайсем хирĕç выляакана d6 çинче çиме хушаççĕ.

7. Kb1—c3 Kg8—f6
8. Фd1—е2 0—0
9. Кс3—d5

Партин пĕрремĕш пайĕ пĕтре. Шуррисем йулашки ходпа хыттăн выляма пуçларĕç. Малала мĕнле вылямалине кунта пăхмăпăр.

Парти пуçламăшĕнче мĕнле выляамалине тата тепĕр тĕслĕх илсе кăтартар. Каллех фигурăсемпе пешкăсене хăйсен йĕркипе лартса тухăпăр.

1. d2—d4 d7—d5
2. c2—c4 . . .

Пĕлмеле мар ход. Шуррисем пешкăна ахалех панă пек туйăнать. Йанăшмарĕç-ши вĕсем?

2. . . . . е7—е6

Хурисем тĕрĕс турĕç, вĕсем шуррисен панă пешкăна çимерĕç. 2. . . . . d5 : c4 çисен, шуррисем 3. е2—е4 сикетчĕç. Халĕ шурă пешкăсем центра вырнаçрĕç, с4 çинче ларакан хура пешкă питĕ начар ларать, вăл ытти

пешкăсенчен уйăрăлса кайнă, ҫавăнпа та ăна халех ҫиме пулать. Шуррисем тĕрĕс тунине темиҫе партире те кăтартнă.

3. Kg1—f3 Kg8—f6
4. Cc1—g5 . . .

Слона ирĕке кăларса, ҫав вăхăтрах хура лашана ҫыхăнтарса

4 . . . . Cc8—e7

Выљама вĕренекенсем шах уссийĕ ҫинчен шухăшласа пăхмасăрах шах пама питĕ йуратаҫҫĕ. Хурисем кунта ҫапла кайма пултарнă 4 . . . . cf8 - b4+, анчах шуррисем 5. Kb1—c3 сиксе шахран лашапа хӳтĕленчĕҫ. Кун пек шахăн усси ҫук.

5. e2—e3 . . . .

Шуррисем халљ ҫеҫ c4 ҫинче тăракан пешкăна f1 слонпа хӳтĕлерĕҫ.

5. . . . . 0—0
6. Kb1—c3 Kb8—d7

6. . . . Kb8—c6, сиксен начар пулатчĕ, вăл c7 пешкăна сикме кансĕрлетчĕ.

7. Cf1—d3 d5 : c4

Халĕ хурисем пешкăна ҫирĕҫ. Кун пек ҫисе вĕсем центăрти полĕне шуррисен аллине панă пек курăнать. Анчах вĕсем шуррисене ирĕксĕр тепĕр ход тутараҫҫĕ.

8. Cd3 : c4

Партин пуҫламĕш пайĕ ҫакăнпа пĕтет. Малала кашни выљакан хăйĕн планĕпе выљать. Кунта ун ҫинчен тапратмăпăр-ха.

Ҫапла вара, вăййа хатĕрленме 8—10 ход тăвас пулать. Кунта кирлĕ мар ходсем туса вăхăт ирттерме тата пĕр фигурăпа темиҫе ҫĕре ҫӳреме кирлĕ мар. Малтанхи партире шуррисем f1 слонпа малтан e2 ҫине, унтан d3 ҫине, кайран c4 ҫине сикни усăсăр, тӳрех слонпа c4 ҫине кайни усăлă, мĕншĕн тесен вăхăт нумай кирлĕ мар. Шуррисем йаланах пĕр ход малтан тунă пирки малтанах хыттăн тапăнаҫҫĕ, хурисен хӳтĕленме лекет: лайăх выљанă чухне час-часах ҫавăн пек пулать те.

## *Парти пуçламăшĕнчи матсем*

*(Тĕслĕхсем)*

Хăш чухне, лайăх шухăшласа выљамасан, йе выљана чухне фигурăсене тĕрĕс лартса тухмасан, парти пуçламăшĕнчех мат илме пулаť. Тĕслĕхсемпе паллашăпăр, вĕсем, мĕнле выљама йураманнине кăтартаççĕ.

| | I. Шуррисем | Хурисем |
|---|---|---|
| 1. | f2—f4 | e7 - e6 |
| 2. | g2--g4?? | Фd8—h4× |

йе тата:

| | II. Шуррисем | Хурисем |
|---|---|---|
| 1. | e2—e4 | e7—e5 |
| 2. | Cf1—c4 | Cc8—c5 |
| 3. | Фd1—h5 | Kf8—f6?? |
| 4. | Фh5:f7× | |

Çакăн пек матсене выљама вĕренекен пĕрер илсен вĕсене вăл манмаcť вара.

| | III. Шуррисем | Хурисем |
|---|---|---|
| 1. | f2—f4 | e7—e6 |
| 2. | d2—d4 | Kg8—f6 |
| 3. | h2—h3? | Kf6—e4 |
| 4. | Kb1—c3?? | Фd8—h4+ |
| 5. | g2—g3 | Фh4 :g3× |

| | IV. Шуррисем | Хурисем |
|---|---|---|
| 1. | e2—e4 | e7—e5 |
| 2. | Cf1—c4 | Cf1—c5 |
| 3. | Фd1—f3 | . . . . |

Чăнах та ĕнтĕ, ку начар ход, ферзĕна нихăçан та çăмăл фигурăсене хăма варрине кăлармасăр кăларма йурамаcť. Анчах, хаљхи вăхăтра, хирĕç выљакан йăнăш ходсем тунă пирки, вăл аван ход пулса тăраť.

| | | |
|---|---|---|
| 3. | . . . . | Kg8—h6?? |

Хурисем лашана центр патнерех илсе пырас вырăнне (Kg8—f6 f7 пешкăна хупласа) хăма хĕрне илсе кайаççĕ. Çавăн пирки вĕсем мат илеççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| 4. | d2—d4 | Cc5 : d4 |
| 5. | Cc1 : h6 | g7 : h6 |
| 6. | Фf3 : f7× | |

| V. Шуррисем | Хурисем |
|---|---|
| 1. e2—e4 | c7—c5 |
| 2. Kg1—f3 | Kb8—c6 |
| 3. d2—d4 | c5 : d4 |
| 4. Kf3 : d4 | e7—e5? |

Шикленмесĕр тунă ход. Кунта 4. . . . e7—e6 выљамала пулнă.

| | |
|---|---|
| 5. Kd4—f5 | Kg8—e7?? |

Çак хăйне пĕтерекен ход тунă пирки, партине кам выљаса илесси тӳрех палăрчĕ.

6. Kf5—d6×

Выљаканĕ пăвăнат, куна вырăсла „запертый мат“, („хупăнса пулнă мат“) теççĕ.

| VI. Шуррисем | Хурисем |
|---|---|
| 1. e2—e4 | e7—e5 |
| 2. Kg1—f3 | Kg8-f6 |

I. пешкăна хăратса

| | |
|---|---|
| 3. Kf3 : e5 | Kb8—c6 |

Кĕтмен çĕртенех хурисем пĕр пешкă парса, хăйсен çулне хăвăрт уçса хăйсем çĕмĕрме шухăшларĕç.

| | |
|---|---|
| 4. Ke5 : c6 | d7 : c6 |
| 5. d2—d3 | Cf8—c5 |

Хурисем халĕ аван лараççĕ, анчах шуррисем аван выљасан вĕсем парти выљаса илме пултараймаççĕ-ха.

| | |
|---|---|
| 6. Cc1—g5? | . . . . |

6. Kf6—g4 сикме кансĕрлесе Cf1—e2 сикмеле пулнă. Шуррисем, йăнăш ход тунă пирки, партине часах выљаса йараççĕ.

| | |
|---|---|
| 6. . . . . | Kf6 : e4! |
| 7. Cg5 : d8 | . . . . |

Шуррисем ферзĕна выљаса илеççĕ, анчах хăйсене икĕ ходра мат пулат.

| | |
|---|---|
| 7. . . . . . | Cc5 : f2+ |
| 8. Kpe1—e2 | Cc8—g4× |

Кунта пăхнă партисенче йăнăшсем питех те нумай, çапах та вĕсем выљама вĕренекенсене нумай пулăшу параççĕ.

Ку тĕслĕхсенче начар ход тăваканнисем йаланах выљаса йачĕç. Шахмăта питĕ тĕплĕн шухăшл аса выљас пулат.

Çавăнпа та кашни шахматисăнах план пулмала. Выљанă вăхăтра çаксене манас пулмаст̆.

1) Пĕр йенчен фигурă йут фигурăсене çĕмĕрме пултартăр тесен, тепĕр йенчен хăйне çимеле мар çĕре тата хăйне хăвалама пултарман полĕ çине лартас тесен хăш полĕ çине лартмалине.

2) 1, 2 йе 3 ходсенче хăвăн йўнĕ фигурупа вăйлă фигурăна çиме пулмаст̆-и?

3) Хирĕç выљакан фигурăсене çĕмĕресшĕн пулсассăн, çав вăхăтрах хăйсене çĕмĕрме пулмаст̆-и? Çĕмĕрме май килмесен хўтĕленме йе хăйне çисе йама май килмест-и?

Пешкăпа сикнĕ чухне шикленсе сикес пулат̆, мĕншĕн тесен сикнĕ пешкă хăйĕн малтанхи вырăнне нихăçан та пыраймаст̆, фигурăсем кăна акă малала та кайала та сикме пултараççĕ.

Шахмăт вăййинче питĕ кирли — вăл кашни хода лайăх шухăшласа, усă пама пултарнă ходсем тăвас пулат̆.

Выљама вĕренекене, паллах, кунта каланисем çителĕклĕ мар. Анчах та малтанхи вăхăтра кусем те пысăк усăлă пулĕç. Малала вăйлă шахмăтиссемпе выљаса нумай вĕренме пулат̆.

## ЫЙТУСЕМ

25) Мĕн вăл мат? Мĕн вăл пат?

26) Хăçан çĕнтерў никама та пулмасăр парти пĕтет?

27) Шахмăт правилисене каласа тухăр.

28) Шахмăт вăййинче „план" тесе мĕне калаççĕ?

29) Парти пуçламăшĕнче çапăçу ăçта вăйлă пулат̆?

30) Парти пуçламăшĕнче фигурăсем ăçта лайăх лараççĕ? Центрта йе хĕрринчи флангсенче?

31) Мĕн вăл „сыхăнтарни?".

32) Мĕншĕн парти пуçламăшĕнче пĕр фигурăпа темиçе çĕре çўрени усăсăр?

## IV. ТĔРЛĔ ФИГУРĂСЕМПЕ МАТ ПАНИ

### *1. Ферзĕпа мат пани*

Королҍпа ферзĕ королҍпа ладйа, королҍпа икĕ слон, королҍпа лаша тата слон (икĕ ладйа королҍсăрах) пĕр пĕччен йулнă йут королҍа мат пама пултараççĕ. Пĕр слон, пĕр лаша, тĕрĕс выҍҍасан икĕ лаша та, пĕччен йулнă йут королҍа мат парайма́ççĕ. Тата пешкă та мат пама пултарать, анчах малтан пешкăран ферзĕ тăвас пулать (36-мĕш стр. 29 диаграммăна пăх).

Королҍпа ферзĕ пулсан пĕччен йулнă йут королҍа мат пама çăмăл. Йут королҍа малтан хăма хĕрне хĕстерсе пырас пулать, ăна 33-мĕш диагр. çинче кăтартнă пек тумала.

33.


1. Фb8 — b5 + Крd5 — e6
2. Крe3 — e4 Крe6 — d6

йе 2..... Крe6 — f6 3. Фb5 — e5 + Крf6 — g6 Крe4 — f4 Крg6 — h7 5. Крf4 — g5 Крh7 — g8 6. Фe5 — e7! Крg8 — h8 7. Крg5 — g6 (анчах 7. Фe7 — f7? сиксен пат пулат) Крh8 — g8 9. Фe7 — e8 × йе 9. Фe7 — g7 ×

3. Фb5 — b6 + Крd6 — d7

4. Кре4 — е5 Крd7 — е7
5. Фb6 — е7 + Кре7 — f8

йе 5..... Кре7 — е8 6. Кре5 — f6 Кре8 — f8 7. Фе7 — f7 ×.

6. Кре5 — f6 Крf8 — g8
7. Фс7 — g7 ×

Короԓпа ферзĕ йут короԓа, вĕсем хуҫ те мĕнле ларсан та, 9 ходран мат пама пултараҫҫĕ. Ҫапах та пат пуласран сыхланмала.

## 2. *Икĕ ладйапа мат пани*

Икĕ ладйа короԓ вăййа хутшăнмасăрах ҫыхăнса ҫӳресе, йут короԓа мат пама пултараҫҫĕ. Кунта та паҫăрхи пекех йут короԓа хăма хĕрне хĕстерсе пымала. Ăна мĕнле тумалине 34-мĕш диаграммă ҫинче кăтартнă.

34.



1. Лh2 — h4 Кре5 — f5
2. Ла7 — а5 + Крf5 — g6
3. Лh4 — b4 Крg6 — f6
4. Лb4 — b6 + Крf6 — е7
5. Ла5 — а7 + Кре7 — d8
6. Лb6 — b8 ×

Хирĕҫҫисен фигурăсем пур чухне те вĕсене ҫакăн пек мат пама пулаҫ. 5-мĕш ход хыҫҫăн йут короԓ с8 ҫинче ларнă пулсан, b6 ҫинче ларакан ладйа b8 ҫинче ларса мат парайман пирки, мат парасси тепĕр хода йулаҫ. 6. Ла7 — h7 Крс8 — d8 7. Лb6 — b8 ×. Икĕ фигурă ҫыхăнса ҫӳрени пысăк усă пани ҫак тĕслĕхре лайăх курăнчĕ.

### *3. Пĕр ладйапа мат пани*

Пĕр ладйа пĕччен мат параймасҭ. Вăл хăй королĕпе пĕрле çӳресе кăна мат параҭ. Пĕр ладйапа мат пама йавăртарах. Кунта та, ытти тĕслĕхри пекех, йут короҙа хăма хĕрне хĕстерсе пымала.

35. 

| | | |
|---|---|---|
| 1. | Ла8 — е8 | Крf5 — f4 |
| 2. | Ле8 — f8 + | |

Хура королĕн ирĕксĕрех тепĕр лини çине каймала шуррисем шах парса ăна хăма хĕрнеле хĕстерсе пыраççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| 2. | . . . . | Крf4 — g5 |
| 3. | Крd4 — е4 | Крg5 — g6 |

Хурисем короҙпа g4 çине кайсан, шурă ладйа g8 çинчен шах панă хыççăн h лини çине куçмалине сисеççĕ. Çавăнпа та вĕсем урăхла сикме шут тытрĕç.

| | | |
|---|---|---|
| 4. | Кре4 — е5 | Крg6 — g7 |

Кунта та хурисем 4. . . . Крg6 — g5 сиксен вара 5. Лf8 — g8 +

| | | |
|---|---|---|
| 5. | Лf8 — f6! | Крg7 — g8 |
| 6. | Кре5 — f5 | Крg8 — g7 |
| 7. | Крf5 — g5 | Крg7 — g8 |
| 8. | Крg5 — g6 | Крg8 — h8 |
| 9. | Лf6 — f8 × | |

7-мĕш ходра хурисем 7. . . . Крg7 — h7 сикнĕ пул сассăн: 8. Лf6 — g6 Крh7 — h8 9. Крg5 — f6 Крh8 — h7 10. Крf6 — f7 Крh7 — h8 11. Лg6 — h6 × килсе тухаҭчĕ.

Кунта та шуррисем пат пуласран сыхланмала, сӑмахран 11. Лg6 — g7? сикнӗ пулсан пат пулнӑ пирки хура короҫӑн ход пӗтнипе ҫӗнтерӳ никама та пулмасҫӗ.

Тӗрлӗ вырӑнтан короҫпа ладйа пӗр короҫа 16 ход хушшинче йаланах мат пама пултараҫҫӗ.

Шуррисемшӗн аван пулнӑ положенинче мат кунта кӑтартнӑ пек мар, хӑвӑртрах пама пулаҫ. Выҫанӑ чухне 36-мӗш диагр. ҫинче кӑтартнӑ пек пулчӗ тейӗпӗр, кунта хӑвӑрт мат пама пулаҫ.

1. Лс6 — с1! (йе Лс2, с3, с4, с5) кун пек хода кӗтсе илекен ход теҫҫӗ, тӗрлӗ партире вӑл тӗрлӗ усӑ параҫ. Ку партире ҫакӑн пек икӗ усӑ кӑтартаҫ:

1) Хура короҫа b линирен кӑлармасҫ (сылтӑмала).

2) Ладйа хура короҫтен айакка уйӑрӑлса кайаҫ, ӑна мӗншӗн тунине епӗр икӗ ладйапа мат панӑ ҫӗрте куртӑмӑр, тата 30 диаграммӑра кӑтартнӑ.

36.



| | | |
|---|---|---|
| 1. | . . . . . . | Крb7 — a7 |
| 2. | Лс1 — с7 + | Кра7 — a8 |
| 3. | Крb5 — b6 | Кра8 — b8 |

Кунта хура короҫа кӗтессе лартмала, ҫавӑнпа та шуррисем кӗтсе илмели ход тӑваҫҫӗ.

| | | |
|---|---|---|
| 4. | Лс7 — с1 | Крb8 — a8 |
| 5. | Лс1 — с8 × | |

Ҫапла вара, 36-мӗш диаграммӑра кӑтартнӑ положенинче шуррисем 5 ходра мат пачӗҫ.

## *4. Икӗ слонпа мат пани*

Икӗ слонпа короҫ пӗр пӗччен йулнӑ йут короҫа кирек мӗнле ларнӑ ҫӗртен те 18 ход хушшинче мат пама пултараҫҫӗ. Кунта йут короҫа кӗтессе хупӑрлас пулаҫ.

Малтан епӗр хура короҫ кӗтесре ларнӑ чухне мӗнле мат памалине пӑхӑпӑр. 37-мӗш диаграммӑ ҫинче хирӗҫҫисем ҫав тери лайӑх ходсем тусан та, шуррисем 4 ходран мат параҫҫӗ. Кунта икӗ фигурӑ пӗрле ҫыхӑнса (пӗрлешсе) ҫӳрени, йут короҫ кайма пултарнӑ полӗсене картлани питӗ кирлӗ.

37.



1. Cg6—f5 . . . .

хура короҫа пӗр ҫул ҫине анчах каймала хӑварса.

| | |
|---|---|
| 1. . . . . | Kph8—g8 |
| 2. Kpf6—g6! | Kpg8—h8 |
| 3. Ch6—g7+ | Kph8—g8 |
| 4. Cf5—e6× | |

Партине выҫаса илмешкӗн, пирӗн шурӑ короҫа кӗтесри полӗ ҫинчен лаша кайма пултара-

38.



кан полё çине илсе пымала пулчё. Çакна асра тытас пулат. Кун пек тумасан шуррисем мат пама пултараймаççё.

Халё ёнтё хура короља кётесе мёнле хăвалаcа пырса хупăрлассине пăхăпăр.

1. Ce5—f4+ Kpd2—e2
2. Cf5—g4+ Kpe2—f2
3. Kpc4—d3 . . .

Слонсем хăйсен ёçёсене турёç. Хура король çулёсем сахалланса пыраççё.

3. . . . . Kpf2—f1

3. . . . Kpf2—e1 сиксен, вара 4. Kpd3—e3 Kpe1—f1 5. Kpe3—f3 Kpf1—e1 6. Kpf3—g3! Kpe1—f1. 7. Cf4—d2 тата малала та.

4. Kpd3—e3 Kpf1—g2

4 . . . Kpf1—e1 сиксен, вара 5. Cf5—g3+Kpe1—f1 6. Cg3—h4 Kpf1—g2 7. Kpe3—e2 Kpg2—h2 8. Kpe2—f2! Kph2—h1 9. Cg4—f5 (кирлёрен те кирлё кётсе илмели ход) Kph1—h2 10. Ch4—g3+Kph2—h1 11. Cf6—e4 мат. Йе 7 . . . . Kpg2—g1 8. Ch4—g3 Kpg1—g2 шуррисем 5 ход туна хыççăнхи положени пек пулчё.

5. Kpe3—e2! Kpg2—g1
6. Kpe2—f3 Kpg1—f1
7. Cf4—d2! Kpf1—g1
8. Kpf3—g3! . . . .

Шурă король кётесри клеткăран лаша кайма пултарнă çёре пырса ларчё, унсăрăн мат пама пулмасть:

8. . . . . Kpg1—f1
9. Cg4—d1 Kpf1—g1

Хура король пёр вырăнтах тапăртатса тăмали клеткăна лекрё.

10. Cd1—e2 Kpg1—h1
11. Cd2—e1! Kph1—g1
12. Ce1—f2+ Kpg1—h1
13. Ce2—f3×

Куна лайăх вĕренĕр! Икĕ лашапа король пĕччен йулнă йут корольа, вăл лайăх выльасан, мат пама пултараймаççĕ. Сăмахран, шуррисем—Крb3, Ка2 тата Kd4, хурисем Крb1 çинче ларaççĕ. Шуррисен малтан сикмеле пулсан, хурисем йăнăш сиксен, вĕсем выльаса илме пултараççĕ.

1. Ка2—с3+ сиксен хура король с1 тата а1 полĕсем çине кайма пултарать. Хурисем с1 çине кайсан, тата а1 çине кайсан парти мĕнпе пĕтме пултарнине выльама вĕренекене хăйне туса пăхма хушатпăр.

Слонпа лаша тата король тепĕр корольа мат пама пултараççĕ. Вĕсемпе мат пама питĕ йăвăр; çавăнпа та епĕр ăна ку кĕнекере пăхмастпăр.

## ЫЙТУСЕМ:

33) Хăма варринче корольпа ферзĕ йут корольа мат пама пултараççĕ-и?

34) Корольпа ладйа миçе ходра мат пама пултараççĕ?

35) Икĕ слонпа мат панă чухне, йут король кĕтесре пулсан, корольна мĕнле клеткă çине лартмала?

## V. ПАРТИН ХĂШПĔР ÇĂМĂЛ ВĔÇĔСЕМ.

Лайăх выљаса, парти пĕтнĕ çĕреле пĕр ладйа йе икĕ слон ытлашши йулсан питĕ аванччĕ. Епĕр вара, малти пайра кăтартнă тĕслĕхсемпе усă курса, партине часах выљаса илме пултараттăмăр. Хирĕç выљакан хăйĕн вăйлă фигурине ферзĕна ахалех лартса парсан партине выљаса илес ĕç татах çăмăлланат. Анчах кун пек тăвакан шахматиссем сахал. Шахматис мĕн чухлĕ вăйлă выљат, çавăн чухлĕ вăл хăй фигурисене ахаљ лартса памаст. Нумай тĕслĕхсенче хăшпĕрисен хирĕççисеннинчен фигурăсем сахалрах пулсан та партине выљаса илнине епĕр куртăмăр. Мĕншĕн капла пулат-ха вăл?

Вăйлă выљакан шахматиссем партине выљаса илесси малтанхи 8—10 ход хушшинче фигурăсене хăма варрине лайăх вырăна лартнинчен килет. Кам хăй фигурисене лайăх вырăна лартат, çавă, партине çавăн чухнех выљаса илмесен те, фигурă та пулсан выљаса илме пултарат.

Епĕр ку пайра, пĕрисем теприсенчен пĕр пешкă йе икĕ пешкă хушши вăйлăрах пулсан (ытти фигурăсем пулмасан) партине мĕнле выљаса илмелине кăтартăпăр.

### *1. Короља икĕ пешкă пĕр короља хирĕç.*

Корољ темиçе пешкăпа (иккĕрен ытларах) пĕр короља хирĕç выљасан партине часах илме пултарат. Виççĕ йе тăватă пешкă ытлашши пулсан, партине выласа илме питĕ çăмăл, ăна выљама вĕренекен хăй те тупма пултарат. Кун пек чухне пешкăран ферзĕ анчах тумала. Икĕ пешкă ытлашши чухне те выљаса илме çăмăл, анчах, çăмăл пулсан та, ăна пăхса тухни кансĕрлемест. Кунта та пешкăран ферзĕ тума тăрăшмала. 39-мĕш диаграммă çинче шурă пешкăсенчен пĕри, хăйсен королĕ пулăшнипе ферзĕна тухат.

39. 

| | |
|---|---|
| 1. Крd2—d3 | Крd5—d6 |
| 2. e3—e4 | Крd6—e6 |
| 3. d4—d5+ | Крe6—e5 |
| 4. Крd3—c4! | . . . |

Выђама вӗренекенсемшӗн ку питӗ кирлӗ. Пӑхсассӑн—шуррисем йӑнӑш сикрӗҫ темеле; вӗсем e4 пешкӑна ахалех параҫҫӗ пек. Анчах хурисен пешкӑна ҫиме йурамаст̆, ҫисессӗн 4 . . . . . Крe5: e4 кайран 5. d5—d6 хура корођ d пешкӑна хӑваласа ҫитеймест, вӑл ферзӗна тухса кайат̆. Сӑмахран, 5. . . . . Крe4—e5 6. d6—d7 Крe5—e6 7. d7—d8Ф

| | |
|---|---|
| 4. . . . . | Крe5—d6 |
| 5. Крc4—d4 | Крd6—d7 |
| 6. e4—e5 | Крd7—e7 |
| 7. d5—d6+ | Крe7—e6 |
| 8. Крd4—c5 | . . . . . |

Каллех ҫавӑн пекех хурисем e5 пешкӑна ҫиме пултараймаҫҫӗ.

| | |
|---|---|
| 8. . . . . . | Крe6—d7 |
| 9. Крc5—d5 | Крd7—d8 |
| 10. e5—e6 | . . . . . |

Хура корођ кайма пултарнӑ полӗсем сахалланса пыраҫҫӗ. Вӑл урӑх кайала чакма пултараймаст̆.

| | |
|---|---|
| 10. . . . . . | Крd8—e8 |
| 11. Крd5—c6 | Крe8—d8 |
| 12. e6—e7+ | Крd8—e8 |
| 13. Крc6—c7 | |

Халӗ шуррисем выђаса илеҫҫӗ. Сӑмахран, 13. . . . .

Кре8 — f7 14. Крс7 — d8 пешкӑ ферзӗна тухать. Ку тӗслӗхе пӑхнӑ хыҫҫӑн ҫакӑн пек вывӑдсем тума пулать.

1) Короԓпа икӗ пешкӑ пӗр короԓа хирӗҫ ҫӑмӑл выԓаса илеҫҫӗ.

2) Икӗ йунашар ларакан пешкӑ (пӗр пешкӑ теприне хӳтӗлесе ларать пулсан), хӑйсен королӗ пулӑшмасӑрах, йут короԓ патӗнче ларма пултараҫҫӗ. Йут короԓ пӗр пешкине те ҫиме пултараймасть; ҫисен—тепри ферзӗна тухса кайать.

Халӗ ӗнтӗ уйрӑм ларакан пешкӑсем икӗ пешкӑ мӗнле выԓаса илнине пӑхӑпӑр. 40 диаграммӑ ҫинче шурӑ пешкӑсем уйрӑм лараҫҫӗ. Кунта та шуррисем выԓаса илеҫҫӗ. Шурӑ пешкӑсем хӑйсен королӗ пулӑшмасӑрах ферзӗна тухма пултараҫҫӗ. Калӑпӑр, малтан хурисен сикмеле, вӗсем пешкӑсене ҫисе йарасшӑн. Анчах пӗрне ҫинӗ вӑхӑтра тепӗр пешкӑ ферзӗна тухса кайать.

40. 

| | |
|---|---|
| 1. . . . . | Крd4 — c4 |
| 2. g3 — g4 | . . . . |

Халӗ хурисен мӗн тумала-ха? Пешкӑ патне каймала. кайни усӑсӑр, пӗреххуччен пешкӑна ҫийес, кайран g пешкӑ патне кайас тесе шухӑшлаҫҫӗ хурисем.

| | |
|---|---|
| 2. . . . . | Крс4 — b3 |
| 3. g4 — g5 | Крb3 : a3 |
| 4. g5 — g6 | |

Шуррисем выԓаса илеҫҫӗ, мӗншӗн тесен хура короԓ g пешкӑна ҫитсе ҫисе йараймасть.

Хура короԓ малтан g пешкӑна ҫисен те, ҫавӑн пек пулать.

| | | |
|---|---|---|
| 1. | . . . . | Крd4 — e4 |
| 2. | a3 — a4 | Крe4 — f3 |
| 3. | a4 — a5 | Крf3 : g3 |
| 4. | a5 — a6 | |

Капла *a* пешкă ферзĕна тухнă пирки шуррисем выҫаса илеҫҫĕ.

## *Тăваткал правили*

**(Пĕр пешкă короҫа хирĕç)**

Шахмăт хăми ҫинче, йулашкинчен пĕр короҫ, пешкă тата тепĕр йут короҫ йулма пултарать. Ҫакăн пек чухне пешкă патĕнчен икĕ королĕ те айакра тăма пултараҫҫĕ. Йут короҫ пешкăран айакра тăни сийенлĕ, мĕншĕн тесен пешкă ферзĕна тухса кайма пултарать. Пешкăран ферзĕ пуласси, ăна йут короҫ ҫитсе ҫиме пултарманнинчен килет. Короҫ йут пешкăна ҫитме пултарнипе пултарманни ҫинчен калакан правилă пур. Акă вăл йĕрке. Шахмăт хăми ҫинче шухăшра тăваткăл тăвас пулать. Ҫак тăваткăлăн пĕр йенĕ пешкă тăракан полĕпе вăл ферзĕ пулма пултарнă полĕ таран пулать. Унăн ытти йенĕсене тупма йăвăр мар. Тăваткăлăн пур йенĕ те пĕр тан. Ҫапла вара шахмăт хăми ҫинче хамăр шухăшра тăваткăл тума пултаратпăр. Короҫ ҫав тăваткăла кĕрет пулсан (йе ҫав тăваткăлта тăрать пулсан) пешкăна йаланах ҫитме пултарать.

41.




Малтан шуррисем йе хурисем сиксен те ҫĕнтерӳ никама та пулмасть.

42.




Малтан шуррисем сиксен выҫаса илеҫҫĕ. Малтан хурисем сиксен—ҫĕнтерӳ никама та пулмасть.

41-мӗш диаграммӑ ҫинче тӑваткӑл пур, ун йенӗсем ҫакӑн пек — а5 — а8 — d8 — d5 — а5. Кунта хура король малтанах тӑваткӑлта тӑрат, ҫавӑнпа та кирек хӑшӗн малтан сикмеле пулсан та, вӑйӑ, хура король шурӑ пешкӑна ҫитсе ҫисе йанӑ пирки, ҫӗнтерӳ никама та пулмала мар пӗтет, сӑмахран, шуррисем: 1. а5 — а6 кайсан (шурӑ король хӑй пешки патне кайни усӑсӑр, мӗншӗн тесен хура король унта шурӑ корольтан малтан ҫитет. Хӑвӑр туса пӑхӑр) 1. . . . . Крd5 — с6 (хура корольпа Крd5 — с5?? сиксен партине выльаса йараҫҫӗ 2. а6 — а7 пешкӑ тухса кайат) 2. а6 — а7 Крс6 — b7 (Вӑхӑтра ҫитрӗ! Шурӑ пешкӑ пӗтет — кайран ҫӗнтерӳ никама та пулмаст). Хурисем малтан сикнӗ пулсан, вӗсем пешкӑна пӗр ход маларах ҫитсе чаратчӗҫ.

42-мӗш диаграммӑра шуррисем малтан сиксен партине выльаса илеҫҫӗ. Шурӑ пешкӑ сиксен тӑваткӑл пулат, хура король хӑйӗн ходӗнче вӑл тӑваткӑла кӗреймест. Сӑмахран, 1. g3 — g4 Кра3 — d4 (король пешкӑна ҫитме диагональ тӑрӑх кайат, вӑл тӳрӗрен те тӳрӗ ҫул. Куна манас пулмаст!). 2. g4 — g5 Крb4 — с5. 3. g5 — g6 Крс5 — d6 4. g6 — g7 Крd6 — е7 5. g7 — g8Ф малтан хурисем сиксен ҫӗнтерӳ никама та пулмаст. Сӑмахран, 1. . . . Кра3 — b4 (йе b3), тӑваткӑл ашне кӗрсе 2. g3 — g4 Крb4 — с4 3. g4 — g5 Крс4 — d5 (король халӗ диагональ тӑрӑх кайат) 4. g5 — g6 Крd5 — е6 g6 — g7 Кре6 — f7 шурӑ пешкӑ пӗтет.

Тӑваткӑл правилипе усӑ курнӑ чухне ҫакна астӑвас пулат: малтанхи вырӑнта ларакан пешкӑсем (шуррисем 2-мӗш ӗретре, хурисем 7-мӗш ӗретре) сикнӗ чухне тӳрех пӗр полӗ урлӑ сикме пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та тӑваткӑл тунӑ чухне, малтанах 2-мӗш лини ҫинче ларакан шурӑ пешкӑсене 3-мӗш лини ҫинче ларнӑ пек, 7-мӗш ҫинче ларакан хура пешкӑсене 6-мӗш лини ҫинче ларнӑ пек шухӑшламала. Корольпа пешкӑ корольа хирӗҫ мӗнле выльамалине кӑтартакан тӗслӗхсемпе паллашӑпӑр.

Пешкӑ, хӑйӗн королӗ пулӑшнипе ферзӗна тухса партине выльаса илес шухӑшпа, 6-мӗш горизонталь ҫине ҫитнӗ тейӗпӗр. 43-мӗш диаграммӑра ун пек пулакан тӗслӗхсенчен пӗрне кӑтартнӑ. Кунта партийе выльаса илесси вӑйлинчен килмест, малтан камӑн сикмелинчен килет. Малтан шуррисем сиксен — ҫӗнтерӳ никама та

43. 

пулмасť, хурисем сиксен — шуррисем выљаса илеççĕ. Сăмахран, шуррисем малтан сиксен: 1. d6 — d7 + (Короља сикни усăсăр, мĕншĕн тесен хурисем d7 çине ларма пултараççĕ, ăна кайран каллех унтан хăваламала пулаť). 1. . . . . Кре8 — d8 2. Кре6 — d6 (пешкăна сыхламали пĕртен пĕр май). Халĕ ĕнтĕ пат пулчĕ, хурисем ниçта та кайма пултараймаççĕ.

Малтан хурисем сиксен: 1. . . . . Кре8 — d8 1. . . . . (Кре8 — f8 сиксен шуррисем 2. d6 — d7 сиксе партине тата часрах выљаса илетчĕç) 2. d6 — d7 Крd8 — c7 (урăх ход çук) 3. Кре6 — e7 (Тепĕр ходра шуррисем ферзĕ тăваççĕ) кайран вара партине те выљаса илеççĕ.

## 3. *Оппозици. Хĕрринчи пешкă.*

Йулашки тĕслĕхре çакна асăрхаса хăвармала: пешкăна 6-мĕш горизонталь çине çитернĕ çĕре, хура король шурă король тĕлĕнче лармала мар тăвас пулаť. 43-мĕш диаграммăра хура король d8 çинче ларať пулсан (шурă король тĕлĕнче мар, пăртак айаккинерех), шуррисем малтан сикмеле пулсан, вĕсем d6 — d7 сиксе партине выљаса илеççĕ.

Корольсем пĕр-пĕрне хирĕç диагональ çинче, вертикаль çинче, горизонталь çинче тăнă чухне, вĕсем хушшинче 1, 3, 5 полĕ пулсан (полĕ шучĕ иккĕне валĕçенмест пулсан), куна о п п о з и ц и теççĕ. Оппозицине кăтартакан тĕслĕх епĕр 43-мĕш диаграммăра куртăмăр. 44-мĕш диаграммăра 4 оппозици кăтартнă: 1) горизонталь çинче, 2) вертикаль çинче, 3-мĕшпе 4-мĕш) диагональ çинче. Кунта пур тĕслĕхре те корольсем хушшинче пĕр полĕ тăраť,

весем хушшинче 3 йе 5 поле тăма пултарать. Кам хирĕç выљакана корољпа ирĕксĕр сиктерет, çав оппозицине йышăнать. Епĕр пăхнă 43-мĕш диаграммăра шуррисем оппозици

44.




йышанса (хурисене ирĕксĕр корољпа сиктерсе) партийе выљаса илеççĕ, хурисем йышăннипе çĕнтерӳ никама та пулмала мар тăваççĕ. Оппозиципе усă курма пĕлни партин йулашки пайĕнче (ендшпилре) питĕ кирлĕ.

Оппозици çинчен лайăхрах ăнланма тата пĕр-ике тĕслĕх илсе пăхăпăр.

45.



| | |
|---|---|
| 1. . . . . | Крe6—d6 |
| 2. Крe4—f5 | Крd6—e7 |
| 3. Крf5—e5 | Крe7—d7 |
| 4. Крe5—f6! | Крd7—e8 |

4. . . . Крd7—d6 сиксен, вара 5. e3—e4 сиксе, шуррисем хура короља пешкă патне йамаççĕ.

5. Крf6—e6 Кре8—d8
6. e3—e4 Крd8—e8
7. e4—e5! Кре8—f8
8. Кре6—d7 Крf8—f7
9. e5—e6+, пешкă ферзĕна тухса кайат̆.

46.



А. Малтан шуррисем сиксен.

1. Кре5—d6 Крf7—f8

оппозицине тытса тăрас тесе,

2. e3—e4! Крf8—e8
3. e4—e5 Кре8—d8
4. e5—e6 Крd8—e8

43-мĕш диаграммăпа танлаштарса пăхăр.

5. e6—e7, выљаса илеççĕ.

В. Малтан хурисем сиксен.

1. . . . . Крf7—e7
2. e3—e4! Кре7—f7
3. Кре5—d6 Крf7—e8
4. e4—e5 Кре8—d8
5. e5—e6, выљаса илеççĕ.

Çак икĕ тĕслĕхпе паллашнă хыççăн акă йепле вывăд тума пулат̆:

1. Пĕрисен пешкă ытлашши пулсан, вĕсен хăйсен корољне пешкă умне илсе пыма тăрăшмала. Оппозици йышăнма, йе корољ хыçĕнче тăракан пешкă корољран

пĕр полĕ хыҫаларах тăрса, кирлĕ вăхăтра кĕтсе илекен ход тума пултаракан положени тумала.

2. Королĕ хăйĕн пешки умĕнче шуррисемшĕн 6-мĕш горизонталь ҫинче, хурисемшĕн 3-мĕш горизонталь ҫинче тăрсан, малтан кирек камăн сикмеле пулсан та, вĕсем выльаса илеҫҫĕ.

Пешкă хăман хĕрринчи вертикаль ҫинче (а йе h) тăрат пулсан, йут король пешкăран айакра тăмасть пулсан, выльаса илме май ҫук.

47.  48. 

47-мĕш диаграммăра хурисем g8 ҫинчен h8 ҫине, кайала малала сиксех ҫĕнтерӳне никама пулмала мар таваҫҫĕ. Шуррисем кăна хирĕҫ ним те тума пултарай-маҫҫĕ. 48 диаграммăра та ҫĕнтерӳ никама та пулмасть. Кунта интереснă пулать. Хурисем корольпа кайран b8 тата а8 полĕ ҫине кайасшăн, шуррисем кун пек тума чарнă пирки, хайсем ниҫта та кайма пултарайманҫҫĕ. Акă вăл ҫапла пулать: 1. Кра5—а6 Крс5—с6 2. а3—а4 Крс6—с7 (Крс6—с5?? мар, мĕншĕн тесен 3. Кра6—b7 сиксе, хура король кĕтесе кайма пултарнă ҫула картлать.)

3. Кра6—а7 (Короля b8 полĕ ҫине кайма кансĕрлесе) Крс7—с8 4. а4—а5 Крс8—с7 5. а5—а6 Крс7—с8 6. Кра7—а8 Крс8—с7 7. а6—а7 Крс7—с8—пат пулать, мĕншĕн тесен шуррисем ниҫта та кайма пултараймаҫҫĕ.

Акă тата тĕслĕхсем: кунта шуррисем—Ка6 пешкă d4 ҫинче лараҫҫĕ, хурисем—Крb8, тата, шуррисем—Крh5, пешкă h2 ҫинче лараҫҫĕ, хурисем—Крf5 ҫинче лараҫҫĕ. Ку тĕслĕхсенче ҫӳлте кăтартнă пек пулать (кусене хăвăр туса пăхăр).

### 4. *Пешкӑсем пешкӑна хирӗҫ.*

Парти вӗҫӗнче выљакансен час-часах пешкӑсем кана йулаҫҫӗ. Вӗсем пӗчӗк фигурӑ пирки, вӗсемпе выљама ҫӑмӑл пек туйӑнсан та, выљама питӗ йӑвӑр. Вӗсем ҫинчен темӗн чухлӗ кӗнекесем ҫырма пулат. Пулакан положенине тӗрӗс ӑнланас шутпа епӗр ҫӑмӑл, лайӑх тӗслӗхсемпе паллашӑпӑр, мӗншӗн тесен кун пек положенисем турнирсенче час-часах тӗл пулкалаҫҫӗ.

Калӑпар: выљакансен нумай выљанӑ хыҫҫӑн хӑма ҫинче 49-мӗш диаграммӑ ҫинче кӑтартнӑ пек положени пулса тӑрат. Выљакансем иккӗшӗ те пешкӑ патне пыма васканӑ, пешкӑ патне ҫитсен малтан ход тӑваканӗ партийе выљаса йани курӑнат. Сӑмахран, малтан шуррисем сиксен:. Крe4 — d3 Крg3: f3 2. Крd3—d2 Крf3—f2 3. Крd2—d1 Крf2—e3! (Хурисем, шурӑ корољ 45-мӗш пе-

49.



46-мӗш диагр. ҫинче 6-мӗш горизонтаља йышӑннӑ пек, корољпа 3-мӗш горизонтаља йышӑнчӗҫ) 4. Крd1—e1 f4—f3 5. Крe1—f1 f3—f2 6. Крf1—g2 Крe3—e2 хурисем выљаса илеҫҫӗ. Малтан хурисем сиксен: 1. . . . . . Крg3—h4 2. Крe4 : f4 Крh4—h5 3. Крf4—f5 Крh5—h6 4. Крf5—f6 выљаса илеҫҫӗ. (Вӗҫне хӑвӑр шутласа тупӑр).

Халӗ ӗнтӗ 50-мӗш диаграммӑри положенине пӑхӑпӑр. Шурӑ пешкӑсем лайӑх лараҫҫӗ: вӗсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑннӑ, малала нумай шунӑ. Хура пешкӑсем сапаланчӑк лараҫҫӗ, тата малала та нумай сикмен. Ҫапах та шуррисем 2-мӗш ходра чейе ход тунӑ пирки ҫеҫ партине выљаса илеҫҫӗ.

50. 

1. Крd6—e6! . . . . Хăма çинчен шухăшра g6 пешкăпа h6 пешкăна илсен 46-мĕш диаграммă çинче пулнă положени пек пулат, апла пулсан шуррисем часах выљаса илетчĕç. Анчах кунта хаљ хурисен вăйлă ход пур: 1. . . . . h6—h5 (пешкă ферзĕна тухса, шуррисем шухăшланă плана тĕппипех çĕмĕрсе тăкма пултарать) 2. Крe6—d5! (Çакăнта ĕнтĕ чейелĕх! Шурă король тăваткăла кĕчĕ, халĕ хурисем вăл пешкăпа сиксен ăна шурă король çитсе çиме пултарать. Сăмахран, 2. . . . . h5—h4 3. Крd5—e4 h4—h3 4. Крe4—f3 h3—h2 5. Крf2—g2 пешкă пĕтет) Крg7—h6 3. Крd5—e4 (çапах та король h5 пешкă патне пырать) Крh6—g7. Мĕн тумала халĕ хурисен? Корольпа g5 çине кайма йурамасть, шуррисем g6—g7 сикеççĕ, пешкăна малала сиктерни те ним те памасть). 4. Крe4—f4 Крg7—h6 5. Крf4—g3 Крh6—g7 6. Крg3—h3! (каллех тепĕр чейелĕх 6. Крg3—h4 сикнĕ пулсан хурисем Крg7—h6 сиксен шуррисем ним те тăваймастчĕç).

51. 

Крg7—h6 7. Крh3—h4 Крh6—g7 (урăх ход çук) 8. Крh4 : h5 (шуррисем пешкă выљаса илчĕç).

Крg7—g8! (шуррисем Крh5—h6 сиксен Крg8—h8 сиксе хурисем оппозици йышăнасшăн, 51-мĕш диаграммăна пăх).

Халĕ шуррисем малтан сикмелеччĕ-ха. Вĕсем 9. Крh5—h6 сиксен çапла пулма пултарать: Крg8-h8 10. g6—g7+ Крh8—g8, халĕ 11. Крh6—g6 сиксен пат пулать, 11. Крh6—h5 сиксен, хурисем пешкă выљаса илеççĕ. Шуррисен йепле выљаса илмеле? Куна вулакансене хăйсене тума хушатпăр. Ку 36-мĕш №-лĕ ыйту пулать (отвечĕ кĕнеке хыçĕнче).

Тата выљанă чухне час-часах пулакан тепĕр положенипе паллашăпăр. Кунта шуррисем çапла выљаса илеççĕ.

52.



| | | |
|---|---|---|
| 1. | c4—c5+ | Крd6—d7 |

1. . . . . . Крd6—d5 сиксен, 2. Крf6—e7 Крd5 : d4 3. Крe7—d6 выљаса илчĕç.

| | | |
|---|---|---|
| 2. | Крf6—f7 | Крd7—d8 |
| 3. | Крf7—e6 | Крd8—c7 |
| 4. | Крe6—e7 | . . . . |

Укĕтсе илекен ход

| | | |
|---|---|---|
| 4. | . . . . | Крc7—c8 |
| 5. | Крe7—d6 | Крc8—b7 |
| 6. | Крd6—d7 | |

шуррисем хурисене ирĕксĕр пешкăна памала туса, кайран вара выљаса илеççĕ.

## ЫЙТУСЕМ:

37. Çакăн пек положенинче: шуррисем—Kph8, пешкă a2, хурисем—Kpg2 çинче лараççĕ пулсан, малтан шуррисем сиксен, тата малтан хурисем сиксен вăйă мĕнпе пĕтме пултарнине пĕлес пулат.

38. Çакăн пек положенисенче оппозици пулат-и:

1. Шуррисем—Kpa6, хурисем—Kpe2; II. шуррисем—Kpe8, хурисем—Kpe1; III. шуррисем—Kpb2, хурисем—Kph8?

39. Король хăш лини çинче хăйĕн пешки умĕнче ларат пулсан кирек хăшĕ малтан сиксен те выльаса илме пултарат?

40. Малтан хурисем сиксен шуррисем—Kpd5, пешкăсем f7 тата h5, хурисем—Kph7 положенинче пулсан, вăйă мĕнпе пĕтме пултарат?

41. Малтан шуррисем сиксен çак положенинче парти мĕнпе пĕтме пултарат: шуррисем—Kpf7, пешкă a6, хурисем—Kpb2 пешкă a7?

## *VI. ТЕОРИ ПУҪЛАМӐШӖ.*

### *1. Пӗтӗмӗшле асӑрхаттарусем. Парти тапхӑрӗсем*

Шахматла выљана чухне партине тӗрлӗ майпа выљаса илме пуррине епӗр куртӑмӑр—пуринчен ытла материал йенчен (сӑмахран, фигурӑ йе пешкӑ) ытлашши пулсан выљаса илме ҫӑмӑлтарах. Тата хирӗҫ выљаканӗ йӑнӑш сиксе хӑйех фигурӑна ҫимеле лартса пама пултарать, йе парти пуҫламӑшӗнчех капкӑна (ловушкӑна) лекме пултарать. Ытлашши фигурӑпа тӗрӗс усӑ курса, ҫав вӑхӑтрах хамӑр фигурӑна ахаљ памасан, выљаса илме ҫӑмӑл. Кун пек йапала начар выљакан шахмӑтиссемпе час-часах пулать, ҫавӑнпа та вӗсен партине ырламаҫҫӗ. Выљакан 5 ход тусан, вӑл мӗнле выљанине тӳрех калама пулать.

Выљама вӗренекен шахматиспа лайӑх шахматис вӑйӑи хушшинче мӗнле уйрӑмлӑх пур-ха? Паллах, чи малтан, шахмӑт теорине пӗлнипе шахмӑт техникине пӗлни, тесе калас пулать.

Шахмӑт вӑйӑинче пулнӑ положенисем ҫав тери нумай, ҫав тери расна, тӗрлӗ пулнине, икӗ парти пӗр пек пулма пултарайманнине тахҫанах палӑртнӑ. Ҫавӑнпа та пур партишӗн те пӗр саккун пулма пултараймасть. Ҫапах пур партире те пулакан пӗчӗк саккунлӑха кӑтартма май пулнӑ. Парти виҫӗ пайа, виҫӗ тапхӑра (стадийе) уйӑрӑлать. Пӗрремӗш тапхӑрне дебӳт (пуҫламӑшӗ) теҫҫӗ, ку вӑйӑ пуҫламӑшӗнче пулать, кунта выљакансем иккӗшӗ те хӑйсен фигурисене, малала вирлӗ выљас шухӑшпа, лайӑх вырӑна лартма тӑрӑшаҫҫӗ, кун пек туни—вӑрҫа хатӗрленнӗ пек туйӑнать. Партин иккӗмӗш тапхӑрне мителшпил теҫҫӗ, вӑл дебӳт хыҫҫӑн (вӑйӑ варринче) пулать. Ку пайра, лайӑх вырӑнсене лартса тухнӑ фигурӑсемпе усӑ курса, выљаса илмеле майсем тупмала (выљаса

илесси час-часах çак пайра лайăх выљанинчен килет). Йулашкинчен, виççĕмĕш тапхăрне ендшпил (вăйă пĕтмĕшĕ) теççĕ. Ку партин йулашки пайĕ пулаť. Ку пайра хăма çинче фигурăсем сахал йулаççĕ, вăйă пĕтесси те айакка йулмасť (йе пĕрисем çĕнтереççĕ, йе пĕри те çĕнтереймеççĕ). Кашни пайăн хăйĕн расна уйрăмлăхĕсем пур.

Шахмăт теорийĕ (дебӳт та, мителшпил те, ендшпил те) епĕр пĕлекен шахмăтăн мĕн пур саккунĕсене те пăхăнса тăраççĕ, çавăн пирки те партийе выљаса илес ĕç пăртак çăмăлланаť. „Пĕлни—вăй" тенĕ лозунг шахмăт вăййишĕн те йурăхлă. Ăс-тăна ӳсме пулăшнă пирки (фантази, ăнкарса илни, расчет) шахмăт куљтурăна хăпартас ĕçри паллă оруди пулса тăраť.

Шахмăт теорийĕ партин малтанхи пайне (дебӳта), первайхи 10—12 йе хăшпĕр чухне 15 хода лайăхран та лайăх пăхса тухнă. Шахмăт теорийĕ пысăк вырăн йышăнса тăраť, унсăрăн выљакан суккăрпа пĕрех. Час-часах хăш чухне лайăх выљакан шахматисах начар выљакан шахматиса паранаť. Кун пек йапала теорине пĕлменнинчен килет. Начар выљакан пĕртен-пĕр варианта лайăх пĕлет, тейĕпĕр. Çав варианта лайăх выљакан манма пултарнă. Кун пек йапаласем хулари турнирсенче кăна мар, пĕтĕм тĕнчипе пулакан турнирсенче те сиксе тухаť. Çакна вĕренекенĕн астума кирлĕ. Çавăнпа та малтанхи ходсене тунă чухнех хăвăн фигурусемпе йут фигурăсем ăçта ларнине лайăх асăрхас пулаť, кайран ху пĕлекен çулпа йама асра тытас пулаť. Унсăрăн дебӳтрах партийе выљаса йама пулаť.

### *Фигурăсен вăйĕсене танлаштарни*

Шахмăт ăстисем выљанă чухне кĕтсе илекен ходсем тунине, çимели фигурăсене (йе пешкăсене) çавăн чухнех çименнине, хаклă фигурăсене начар фигурăпа улăштарнипе, кĕтмен çĕртенех фигурăна хăман пĕр йенчен тепĕр йенне илсе лартнине—тӳррипе каласан, шахмăт вăййине хăйсемшĕн лайăхлатма тунă ходсене вĕренекенсем часчасах ăнланаймаççĕ. Хаљ çеç выљама вĕренекен йалан ытлашши фигурăшăн, пешкăшăн, качĕствăшĕн çунаť, мат пама май çук пулсан та, часрах мат пама тăрăшаť. Йалан выљаса вăл кун пек вăйăн уссийĕ çуккине хăйех сисме пултараť. Кун пек выљассине пăрахмала. Йалан тĕплĕн

ăнланса илсе, тĕплĕн шухăшласа, кашни фигурăна хак парса, вĕсем ăçта тăрсан усă пама пултарнине пĕлсе выљăма тăрăшмала.

Фигурăсен вăйĕ çинчен каланă чухне (27 стр.) мĕн чухлĕ пирĕн фигурă нумай, çавăн чухле партине выљăса илес ĕç пирĕншĕн çăмăлланат, тенĕччĕ епĕр. Ку ĕнтĕ пĕр йенчен тĕрĕс, вăл фигурăсене пĕр пĕччен илсе вĕренчĕкле танлаштарнă чухне анчах тĕрĕс.

53. 

Акă пăхăпар 53-мĕш диаграммăна. Çийелтен пăхсассăн— хурисем выљăса илеççĕ темеле, мĕншĕн тесен—вĕсем вăйлăрах (3 пешкă вырăнне ладйа). Кунта фигурăсене пĕр пĕччен илсе танлаштарни нимĕ те пĕлтермест, кунта фигурăсем мĕнле ларса тухни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрат. Шурă пешкăсем мала тухнă пирки тата вĕсем çыхăнса ларнă пирки ладйаран та хаклă тăраççĕ. Тата, шурă пешкăсем ферзĕ пулма пултарнă çĕртрен хура корољ айакра тăни те пысăк вырăн йышăнат. Кунта шуррисем малтан сиксе çапла выљăса илеççĕ.

1. h6 — h7    Лg8 — h8

1. . . . . . . Лg8 : g5 сиксен, 2. h7 — h8Ф сиксе, ферзĕна тухса, партийе выљăса илет.

2. g5 — g6    Крd7 — e7
3. g6 — g7    . . . . .

h7 пешкăна парса вăй илет. Хурисем халĕ кирек мĕнле выљăсан та партийе выљăса йараççĕ.

3. . . . . . Лh8 : h7
4. g7 — g8ф

Шуррисем ферзĕ тата пешкă ытлашши пирки партийĕ часах выљаса илме пултараççĕ (куна хăвăр туса пăхăр).

Çапла вара, ку тĕслĕхре ладйа пешкăсенчен йÿнĕ тăчĕ, пешкăсем ладйаран вăйлă пулчĕç. Çавăнпа та фигурăсене йаланах пĕр хак хума çук. Урăхла каласан фигурăсен вăйне абсољутлă танаштарма çук, май килнĕ тăрăх (относитĕлнă) кăна танлаштарма пулаť. Ăста шахматиссен уйрăмлăхĕ, вĕсен лайăх хочĕсем, пана фигурăна çименни, вăйлă фигурăна начар фигурăпа улăштарни, тата ытти çакăнта ĕнтĕ. Выљама вĕренекен чылай выљанă хыççăн хăш чухне ăна кирлĕ фигура начар çĕре ларса ун вăйĕпе усă курма май çуккине, çав вăхăтрах хирĕç выљакан пĕр лашапах йе слонпах тĕрлĕ хăрамали çĕре çÿресе партийе пăсса çÿренине хăйех те сисет.

Епĕр фигурăсен вăйĕсене пешкăпа танлаштарнă—слон—лашапа пĕр хак, лаша 3 пешка хакне тăраť. Ладйа—5 пешкăпа танашаť, ферзĕ—2 ладйапа йе 10 пешкăпа танашаť, тенĕччĕ. Фигурăсен вайĕсене, малтан, пĕр пĕччен илсе танлаштарсан, кайран хăма çинче пулнă положени тăрăх танлаштарсан, вĕсен вăйĕсем йаланах пĕр пек пулмаççĕ. Епĕр ăна пăхса тухнă тĕслĕхсенче лайăх куратпăр. Кун пек каласа епĕр вĕренекене фигурăсен вăйне пĕлме уйрăм таблица тутарасшăн мар, мĕншĕн тесен хăма çинче пулнă положенинче тăракан фигурăсен вăйĕсене положенинче фигурăсем мĕн тума пултарнине ăнлансан лайăх пĕлме пулаť. Нумай шахмăтла выљасан ăна пĕлме йăвăр мар. Вĕренекен унчухне çапла вывăд тума пултараť; сăмахран, слон лашаран пăртак вăйлăрах, икĕ слон икĕ лашаран чылай вăйлă, мĕншĕн тесен икĕ слон мат пама пултараççĕ, икĕ лаша мат параймаççĕ. Ку ендшпилре анчах мар, мителшпилре те çаплах, слонсем хăварт айакка кайма пултарнă пирки лашаран вăйлăрах. Икĕ ладйа вăйĕ ферзĕ вăйĕпе танлашаť тенĕччĕ, анчах вĕсем пĕрлешсе (раснах иккĕмĕш йе çиччĕмĕш горизонтаљ çинче) çÿресен, ферзĕран вăйлăрах пулма пултараççĕ. Виçĕ çăмăл фигурă (2 слон тата лаша) çыхăнса çÿресен вĕсем те ферзĕран вăйлăрах пулма пултараççĕ. Пешкăсемпе хÿтĕленсе тăракан корољ, пешкăсенчен айакра тăрса хÿтĕленмесĕр тăракан корољтен хаклăрах, мĕншĕн

тесен ана йут фигурăсем час-часах шах парса кансĕрлесе ĕçе тек пăсса пыма пултараççĕ. Ендшпилри короҫ миттелшпилри короҫтен хаклăрах. Фигурă хакĕ пешкăсем айакка сикнинчен, вĕсем ферзĕна тухса кайма пултарнинчен тата пешкăсем çыхăнса ларнинчен килет. Пешкăсен хакĕ, вĕсем пĕр-пĕрне хӳтĕлесе малала сикнĕ çемĕн хăпарса пырать.

Фигурă вăйĕ çинчен лайăхрах ăнланма тепĕр тĕслĕхпе паллашар. 54-мĕш диаграммă çинче каллех ладйан пешкăсене хирĕç кĕрешмеле. Малтан хурисен сикмеле пулсан, вĕсем, шурă короҫпа ладйа начар çĕртре ларнă пирки, пертийе часах выҫаса илеççĕ.

54.



1. . . . . . d3 — d2
2. Лf5 — e5 + . . . .

Хура короҫа хăваласа d линине йышăнса, d3 пешкăна малала сикме чарас тесе, шуррисем шах пачĕç.

2. . . . . Креб — d6

Хурисем ладйана d лини çине йамаççĕ.

3. Ле5 — е8 . . . . .

Шуррисем чейе шухăшпа, хурисем d2 — d1Ф сиксен Ле8 — d8 + сиксе, çĕнĕ ферзĕна çиме тесе кайала чакрĕç.

3. . . . . . Крd6 — d7!

Ладйана тапăнчĕç. Халĕ шуррисен ладйана ирĕксĕр унтан илме лекрĕ, кайран вара хурисем ферзĕна тухса партийе

выҫҫаса илессӗ. 53-мӗш диагр. ҫинче 2 пешка, 54-мӗш диаграммӑ ҫинче с7 пешкӑ пулмасан та парти ҫӗнӳпе пӗтетчӗ. Анчах ферзӗпа ладйана хирӗҫ выҫҫасаҫӗнме йӑвӑр. Ун ҫинчен кунта сӑмах хускатмӑпӑр-ха.

Фигурӑна ахаль панине йе фигурӑна йӳнерех фигурӑпа (пешкӑпа) мӗншӗн улӑштарнине пирӗн халӗ пӗлмеле ӗнтӗ. Ана йаланах, пулнӑ положенинче хӑйсемшӗн аван туса партине выҫҫаса илме тӑваҫҫӗ. Кун ҫинчен шахмӑт искусствин расна пайӗнче етӳдпа задачӑ композицийӗнче нумай каланӑ.

### 3. *Позици*

Партисене мӗнле выҫҫаса иртнипе паллашнӑ хыҫҫӑн йаланах ҫакӑн пек вывӑд тӑватӑн. Шахмӑт хӑми ҫинчи полӗсем пурте пӗр пек мар: пӗрисем фигурӑсене малала йама, ҫӳретме аван, теприсем — апла мар. Хӑма хӗрринчи полӗ ҫинче ларакан фигурӑн нумай полӗ ҫине ҫӳреме ҫук, вӑл сахал полӗ ҫине кайма пултарать. Ҫавӑн пирки унӑн вӑйӗ сахалланать. Ҫапла вара, фигурӑ мӗн чухлӗ центрта тӑрать, ҫавӑн чухлӗ вӑл вӑйлӑрах пулать, мӗншӗн тесен кунта вӗсем кайма пултарнӑ полӗсем нумай.

Ҫапла вара, вӑйсӑр фигурах тепӗр чухне, вӑйлӑ фигурӑран нумай ҫӗре ҫӳреме пултарнӑ пирки, унтан хаклӑрах тӑма пултарать.

Калӑпӑр, кӗрешӳ хӑма хӗрринче пырать (епӗр пӑхнӑ тӗслӗхсенче кун пеккисем пулкаларӗҫ). Епӗр кун пек чухне фигурӑна центрта (кӗрешӳрен айакра) тытса тӑни усӑлӑ пулать-и-ха? Ҫук. Ҫавӑнпа та тата ҫакна астӑвас пулать: мӗн чухлӗ фигурӑ кӗрешӳ патнерех тӑрать, мӗн чухлӗ вӑл пӗр флангӑран тепӗр флангӑна хӑвӑрт куҫма пултарать (кунта вӑхӑтран, миҫе ход тумалинчен килет) ҫавӑн чухлӗ фигурӑ вӑйӗ пысӑкланать. Ҫапла вара, шахмӑт вӑхӑчӗн виҫевӗ—ход пулса тӑрать. Шухӑшланӑ плана пӗр ходра тӑвас вырӑнне икӗ ходра йе виҫӗ ходра туни чӑнахах та ӗнтӗ усӑлӑ мар (41-мӗш страницӑра f1 ҫинче тӑракан слон ҫинчен каланине астуса ил) вӗренсе ҫитмен шахматисӑн иккӗмӗш ход пӗрремӗш ходӑн пултарулӑхне пӗтернӗ пек туйӑнать. Ферзӗпа малтанхи ходсенчех туххсан, вӑл пуринчен вӑйлӑ фигурӑ пулнӑ пирки, ӑна пур начар фигурӑ тапӑнать, ҫавӑнпа вӑл темп пӗтерни кӑна.

пулать. Иурахсăр шах пани шах илекене фигурăна лайăх вырăна лартма пулăшать. Çавăн пекех, пешкăна йе фигурăна çийес тесе хăтланса çӳрени вăхăт иртерни кăна пулать. Йурăхсăр шах пани, фигурăшăн тăрăшни (ăна çини усăсăр пулсан), йурăхсăр ходсем—вĕсем пурте вăййа вăрăма йараççĕ, т е м п а пĕтереççĕ.

Фигурăсен вăйĕсем çинчен каланă хыççăн тата çакăн пек шухăш пырса кĕрет: пĕр выљакан тепринчен м а т е р и а л йенчен çеç в ă й л ă пулмасть, вăл в ă й л а ф и г у р ă т у м а п у л т а р н и н ч е н, п ĕ р ç ĕ р т р е н т е п ĕ р ç ĕ р е х ă в ă р т с и к м е п у л т а р н и н ч е н, фигурăпа пешкăсем çыхăнса çӳренинчен килет. Епĕр кунта шахмăт техникин палла ыйтăвĕ — п о з и ц и п е п о з и ц и т ĕ л ĕ ш ĕ н ч е н л а й ă х р а х х и н е (п о л о ж е н и й е н ч е н в ă й л и н е) кăтартакан ыйту патне çитсе тăтăмăр.

Шахмăт вăййинче теорипе практикă лайăх çыхăнса тăнă пирки шахмăт саккунĕсем аван. Епĕр куна та сăмахпа кăна мар, практикăра туса пăхăпăр та, кайран саккунĕсене лайăхрах ăнланăпăр.

55-мĕш диаграммăра акă, выљакансен иккĕшин те пешкă хисепĕсем пĕр пек пулин те, п о з и ц и т ĕ л ĕ ш ĕ н ч е н л а й ă х л а р н ă пирки, шуррисем выљаса илеççĕ.

55.



Вăл мĕнле пулнине теплĕн пăхса тухăпăр. Пешкăсем иккĕшин те пĕр пек, анчах шурă пешкăсем чылай мала кайнă (f4 — g5 — h6), пешкă мĕн чухлĕ мала кайнă—çавăн чухлĕ унăн хакĕ (вăйĕ) пысăкланнине епĕр пĕлетпĕр

ентĕ. Çитменнине тата, хура пешкăсем çыхăнса тăнă цепе шуррисем татма пултараççĕ. Тепĕр инкек тата кунта—король пешкăсем патĕнчен айакра тăрать. Кун пек чухне темп питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Шуррисем чăнахах та часах выльаса илеççĕ.

1. g2 — g4! . . . . .

Çыхăнса тăнă пешкăсене мĕнле татмалине ку тĕслех питĕ лайăх кăтартать. Хурисен ирĕксĕрех çимеле, унсăр пуçне шуррисем хăйсем çисе партийе тата часрах выльаса илме пултараççĕ.

1. . . . . . f5 : g4

йе 1. . . . . . Крс6 — d7 2. g4 : f5 Крd7 — e7 3. f5 : g6 Кре7 — f8 4. g6 : h7, выльаса илеççĕ.

2. f4 — f5 . . . . .

Шуррисем h6 пешкăн çулне уçма умлăн-хыççăн икĕ пешкă пачĕç, хурисен татах ирĕксĕр çимеле.

2. . . . . g6 : f5
3. g5 — g6 h7 : g6
4. h6 — h7, пешкă ферзĕна тухса кайать.

Çапла вара, позици тĕлĕшĕнчен лайăх тăнă пиркийех, шуррисем партийе выльаса илчĕç. Позици вăл шахмăт партийĕнче, выльанă чухне пулакан положени, кунта икĕ выльаканĕн те лайăххипе начар йенĕсем: вăхăт çителĕклĕхĕпе çитменлĕхĕ, фигурăсем хăвăрт çÿреме пултарни, вĕсен вăйĕ т. ыт. те кĕреççĕ.

Тата тепĕр йăвăртарах примерпа паллашăпăр. (Çелезньов еçучĕ).

56.



56-мӗш диаграммӑра икӗ йенӗн те фигурӑ хисепӗсем пӗр пек пулсан та, шуррисем, позици тӗлӗшӗнчен лайӑх ларнӑ пирки, партийе выҫаса илеҫҫӗ. Хура фигурӑсем нумай ҫӗре кайма пултараймаҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах шуррисем пӗтӗм хӑмипе ҫӳреме пултараҫҫӗ. Шуррисем, кӗтмен ҫӗртенех, слона пешкӑпа улӑштарнӑ пирки, кам выҫаса илме пултарнине палӑртрӗҫ.

1. Cd3 : h7!! Cg8 : h7

Ирӗксӗр. 4. . . . . . Cg8 : c4 сикнӗ пулсан 5. g5 — g6 сиксе, кайран 6. g6 — g7 × мат параҫҫӗ. Куна хурисем нимле те чарма пултараймаҫҫӗ.

2. g5 — g6 Ch7 : g6

2. . . . . Ch7 — g8 сиксен 6. g6 — g7 ×

3. Kph6 : g6

Шуррисем слона тата пӗр пешкӑна улӑштарчӗҫ, анчах фигурӑ ытлашши пулмасан та, позици тӗлӗшӗнчен вӗсем аван ларaҫҫӗ 3. . . . Kph8 — g8 4. Kpg6 — f6 Kpg8 — f8 5. Kpf6 — e6 Kpf8 — e8 6. Kpe6 — d6 b6 — b5 (хурисем, ахаль те пӗтекен пешкӑна ҫиме парса, оппозици йышӑнасшӑн. Анчах, епӗр пӗлетпӗр, шурӑ король 6-мӗш лини ҫинче ларать пулсан йаланах выҫаса илеҫҫӗ). 7. c4 : b5 Kpe8 — d8 8. Kpd6 — c6 (йе 8. b5 — b6 Kpd8 — c8 9. Kpd6 — c6) Kpd8 — c8 9. b5 — b6 Kpc8 — b8 10. b6 — b7 Kpb8 — a7 11. Kpc6 — c7, шуррисем выҫаса илеҫҫӗ.

Каппи выҫаканӑн выҫама пуҫласанах пӗтӗм вӑйа пухса позици тӗлӗшӗнчен лайӑх тӑма тӑрӑшас пулать. Пӗр выҫаканӗ позици тӗлӗшӗнчен йапӑх тӑрать пулсан, унӑн хӑйӗн „вилӗмпе“ кетсе ларма кирлӗ мар. Пӗр ҫӗртре ӗҫ тухмасть пулсан, тепӗр ҫӗртре вӑйлӑн хӗстерме тӑрӑшмала. Пӗри король флангӗнче хӗстерет пулсан, теприн, унта ӗҫ тухмасан, ферзӗ флангӗнче йе центрта хӗстерес пулать. К о н т ӑ р-а т а к а тӑвас пулать. Кун пек туса, вӗсем хирӗҫ выҫакан фигурӑсене тӗп ӗҫрен пӑраҫҫӗ.

## *4. Комбинаци*

Комбинаци тесе мӗне каланине епӗр асӑнлӑччӗ, анчах вӑл мӗне пӗлтернн ҫинчен лайӑхах каламан-ха. Комбинацине

тёрлё положенинче тума пулат. Пёр-пёр шухăша пурнăçа кёртме ходсем тунине вариант теççё. 56-мёш диаграммăри положенипе паллашнă чухне епёр куртăмăр: шуррисем 1. Cd3 : h7 çинё хыççăн хурисем Cg8 : h7 çирёç, анчах вёсем Cg8 : c4 çиме пултарнă, вара урăх вариант пулатчё.

Кун пек чухне çапла калама йышăннă: „хурисем Cg8 : h7 сикрёç (çирёç), анчах вёсем урăх вариантпа— Cg8 : c4 тата урăхла та кайма пултарнă", теççё.

Тепёр йенчен, шуррисем 1. Cd3 : h7 сикес вырăнне урăхла сикме, урăх ход тума пултарнă. Çапла вара, кунта: „шуррисем Cd3 : h7 выљарёç, анчах урăх вариант, сăмахран, слона f1 çине кайсан, начартарах пулатчёç, теме пулат.

Шухăшланă ходсене, темиçе хода умлă-хыçлă пёр шухăша пурнăçа кўртме тунине комбинаци теççё. Комбинаци туни—шухăшланă ходсене фигурă выљаса илмешкён йе позици телёшёнчен лайăх лармашкăн туни пулат. Комбинаци вăл—шахмăт позицийён уççийё; лайăх шахматиссем унпала парти выљаса илеççё. 56-мёш диаграммăра h7 çинче слона пани партийе выљаса илекен комбинаци пулса тăчё. 57-мёшпе 58-мёш диаграммăсем çинче мат памали комбинацисем пур.

57. 

58. 

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1. | . . . . | Kf5 — g3 + | 1. Лb6 : g6 + | h7 : g6 |
| 2. | h2 : g3 | Лc6 — h6 × | 2. Лh1 — h8 × | |

Тата интереснӑ комбинаци пулакан тӗслӗхсемпе те паллашар-ха.

59. 

1. Лh1—h8+ Крg8 : h8
2. Фg6—h7×

60. 

1. Крh4—g3! h2—h1Ф
2. Фh8—a1×
йе 1. . . . h2—h1К+
2. Крg3—f3, вара мат пулатех.

61. 

1. Фf4—f7+ Фе7 : f7
2. е6 : f7+ Кре8—f8
3. f7 : g8Ф×

Ике ходра пулакан матсене пăхса тухар.

62.


63.


1. Фd5—a2! b6—b5
2. Ка5—c4×
йе 1.... Кра6—b5
2. Фа2—c4× йе 1 . . b6 : a5
2. Фа2 : a5×;
йе 1 . . . Кра6—a7 2. Ка5—c6×

1. Фh3—c8 h4—h3
2. Фc8 : h3×
йе 1.... Крh5—h6
2. Фc8—h8×

64.


65.


1. Сh1—a8!!
хурисем кирек мĕнле выља-сан та, шуррисем тепĕр ходра хурисене ферзĕпе мат параç-çĕ (хăвăр тупса пăхăр).

1. Фf3—h3! . . . . .
Чейе ход
1. . . . . . . . Крd4—e4
2. Лc2—c4×

Йулашкинчен тата п а т тумали комбинацисемпе паллашар.

66.



1. . . . . . Лf1 : f6+!
2. Фf8: f6 пат

Шуррисем ирĕксĕр ладйана çирĕç: çимен пулсан ладйа ферзĕна çийетчĕ

67.



1. . . . . Лd3—f3
2. Cc1—f4 . . . .

f7 пĕшкăна хӳтĕлесе тата кайран f7—f8Ф сиксе партине вылђаса илес тесе хăратса

2. . . . . . Лf3—a3+
3. Кра4 : а3—п а т тăват.

## ЫЙТУСЕМ:

42) партире мĕнле тапхăрсем пулаççĕ?

43) Мĕн вăл шахмăт задаччи тата шахмăт етӳчĕ?

44) Вăйсем пĕр пек чухне фигурă нумай полĕ çине кайма йураллă вырăнта ларни мĕн те пулин тума пултарат-и? Тĕслĕхсем тупăр.

45) Шахмăтла вылђанă чухне темп мĕн те пулсан тума пултарат-и? Тĕслĕхсем тупăр.

46) Шуррисем—Кре5, Фа2 хурисем—Крg1, пешкă h2 йышăннă позицири шуррисем хăвăрт вылђама пултарнă хода тупăр. Малтан шуррисем сикеççĕ.

47) Çак позицире шуррисем хăвăрт вылђама пултарнă хода тугăр: шуррисем—Крс7, Кс5, пешкă b5 хурисем Кра8, Ка5 йышăннă. Малтан шуррисем сикеççĕ.

Мĕнле тумалине кĕнеке хыçĕнче кăтартса панă.

## VII. ӐНЛАНТАРСА ПАМАЛЛИ ПАРТИСЕМ

Кӗнекен малтанхи сыпӑкӗсенче ҫырнине ӑнланса илнӗ ҫын хӑй тӗллӗнех шахмӑтла выԓама пултарат̆. Ҫӑнахах та ӗнтӗ, вӑл халӗ лайӑх выԓакансен партийӗпе паллашман-ха. Лайӑх выԓакан шахматиссен вӑййипе паллашсан ҫеҫ шахмӑтла лайӑх выԓама вӗренме пулат̆. Ӗпӗр кунта йӑвӑр партисем ҫинчен ҫырмӑпӑр, шахмӑт ӑстисем мӗнле выԓани ҫинчен вӗренекен кӑштах пӗлтӗр тесе, ҫӑмӑл партисем кӑна илӗпӗр. Ку партисенче те йӑнӑшсем пур, пирӗн вӑл йӑнӑшсенчен тӗлӗнме кирлӗ мар, мӗншӗн тесен ҫын машинӑ мар. Ӑна, йаланах йӑнӑш тӑвас мар тесен, кунта кашни йӑнӑша пӗлме кирлӗ.

| № 1. Морфи | Изуар |
|---|---|
| 1. e2—e4 | e7—e5 |
| 2. Kg1—f3 | d7—d6 |
| 3. d2—d4 | Cc8—g4 |

Слонпа васкаса тухрӗҫ. 3. . . . . e5 : d4 сикнӗ пулсан авантарах пулмалаччӗ.

| | |
|---|---|
| 4. d4 : e5 | Cg4 : f3 |

Ирӗксӗр. 4. . . . . . d6 : e5 сиксен, вара 5. Фd1 : d8+ Крe8 : d8 6. Kf3 : e5 пешкӑна выԓаса илет.

| | |
|---|---|
| 5. Фd1 : f3 | d6 : e5 |
| 6. Cf1 —c4 | Kg8—f6 |
| 7. Фf3 —b3 | . . . |

3-мӗш ходра хурисем йӑнӑш туни кунта палӑрчӗ. Шуррисем пӗр вӑхӑтрах : слонпа f7 пешкӑна, ферзӗпа b7 пешкӑна ҫиме пултараҫҫӗ. Хурисем пӗр ход тусах икӗ пешкӑна хӳтӗлеме пултараймаҫҫӗ: вӗсем b7 пешкӑна пачӗҫ те, f7 пешкӑна хӳтӗлерӗҫ.

7. . . . .                Фd8—e7
8. Кb1—c3                . . . .

Шуррисем пешкăна çимерĕç, çинĕ хыççăн 8. Фb3 : b7 Фe7—b4+ 9. Фb7 : b4 Cf8 : b4+, хурисем пешкăсăр йулчĕç пулсан та, вĕсем ферзĕна улăштарнă пирки, вĕсенчен партийе выљаса илме кансĕр.

8. . . . .                c7—c6

b7 пешкăна сыхласа

9. Cc1—g5 кайрĕç         . . . .

f6 çинче тăракан лашана сыхăнтарса тата хура фигурăсене çўреме кансĕрлесе:

9. . . . . .                b7—b5

Начар ход, куна выљама вĕренекенсем час-часах тукалаççĕ. Кун пек чухне фигурăна хĕсĕрлени ним чул та усă памасť. Хурисем вăййа ўсĕнтерсе çитереймерĕç; питĕ кайа йулса пычĕç.

10. Кc3 : b5!                . . . . .

Фигурăна тĕрĕс пачĕç.

10. . . . . .                c6 : b5
11. Cc4 : b5 +               Кb8—d7
12. 0 — 0 — 0                Лa8—d8

68.



13. Лd1 : d7!                . . . . .

Каллех качĕства ахаљ пачĕç

13. . . . .  Лd8 : d7
14. Лh1—d1  . . . .

Çыхăнса ларнă d7 ладйана хĕсĕрлесе тата Cg5 : f6, Cb5 : d7+ çиме хăратса,

14. . . . .  Фе7—е6

Хурисен нимле шанчăк та çук. Шуррисем пит те лайăх илемлĕ выљаса çĕнтереççĕ.

15. Cb5 : d7+!  Kf6 : d7

Ферзĕпа d7 çинче ларакан фигурăна çини усасăр, кайран 16. Фb3 — b8 + Кре8 — е7 17. Лd1 : d7 + выљаса илетчĕç.

16. Фb3—b8+!!  Kd7 : b8

Пĕртен пĕр ход.

17. Лd1—d8 мат.

2. № Шуррисем  Хурисем

1. e2—e4  e7—e5
2. Kg1—f3  Kb8—c6
3. Cf1—c4  Cf8—c5
4. c2—c3  Kg8—f6
5. d2—d4  e5 : d4
6. c3 : d4  Cc5—b4+

Темпа кайала чакмашкăн, шуррисен шахран хўтĕленмеле.

7. Cc1—d2  Cb4 : d2+
8. Kb1 : d2  d7—d5

Вăййа центрта сарса йамашкăн:

9. e4 : d5  Kf6 : d5
10. 0—0  . . .

10. Фd1—b3 сиксен терес пулатчĕ.

10. . . . .   0—0
11. Лf1—e1   Kd5—f4
12. Фd1—c2   . . . .

Халĕ те 12. Фd1—d3 çÿреме пултарнă.

12. . . . .   Фd8—f6
13. Kd2—f1   . . . .

Шуррисем начарланса йулчĕç, çитменнине тата лашана йăнăш планпа илсе кайрĕç. (69-мĕш диагр. пăх.)

69.



13. . . . .   Kf4 : g2!!

Выљаса илекен ход.

14. Kpg1 : g2   Фf6 : f3+!
15. Kpg2—g1   . . . .

15. Kpg2 : f3 сикнĕ пулсан, Kc6 : d4+ çиетчĕ, кайран Kd4 : c2 ферзĕна çисе икĕ шурă ладйа çине тапăнса качествă выљаса илетчĕ.

15. . . .   Kc6 : d4
16. Фc2—e4   b7—b5
17. Cc4—d3   f7—f5

h7 çине мат пама хăратса тăнă.

18. Фe4 : d4   Cc8—b7

Хурисем выљаса илеççе. Кéске те аван парти.

| № 3. Мӳллер | Грӳнфельд |
|---|---|
| 1. e2—e4 | e7—e5 |
| 2. Kb1—c3 | Kg8—f6 |
| 3. g2—g3 | d7—d5 |
| 4. e4 : d5 | Kf6 : d5 |
| 5. Cf1—g2 | . . . . |

Кунта слон диагонале йышанать.

| | |
|---|---|
| 5. . . . . | Cc8—e6 |
| 6. Kg1—e2 | Kb8—c6 |
| 7. 0—0 | Cf8—e7 |
| 8. d2—d4 | . . . |

Начар ход. 8. d2—d3 выљамала пулнă. Партин варринчи тапхăрĕнче пешкăсене асăрхаса малала сиктерес пулать.

| | |
|---|---|
| 8. . . . | Kb5 : c3 |
| 9. b2 : c3 | . . . . |

Халĕ шуррисен пешкăпа çимеле пулчĕ. d4 пешкă d3 çинче тăнă пулсан вĕсем e2 лашапа c3 çинче ларакан лашана çиме пултарнă. Халĕ кун пек тума йурамасть, ун пек тусан e5 : d4 çийет.

| | |
|---|---|
| 9. . . . . | Ce6—d5! |

Ку ход аван, мĕншĕн тесен хура слон шурă слон йышăннă диагонале йышăнать, кун пек туса тата центăрта хĕстерет.

| | |
|---|---|
| 10. f2—f3 | . . . . |

Шуррисем слонпа улăшма килĕшмерĕç, вĕсем хайсен слонне g2 хура слонтан d5 хаклăрах шутларĕç.

Çапах та вĕсен позицийĕ халĕ татах начарланать,

| | |
|---|---|
| 10. . . . . | 0—0 |
| 11. Cc1—e3 | Фd8—d6 |
| 12. Фd1—d3 | . . . . |

Шуррисем те ферзěпа кайрěç, анчах кӳ ход йурала мар.

12. . . . . Фd6—e6!

Хура ферзě лайăх полě йышăнчě. Хура фигурасем лайăх вырăнта тăни малала курăнать.

13. a2—a4 . . . .

Унсăр пуçне хурисем кӳ пешкăна ахалех çийетчěç.

13. . . . . Cd5—c4!
14. Фd3—d2 e5 : d4
15. c3 : d4 . . . .

15. Ce3 : d4 çиме йураман, Фe6 : e2 çисе фигура выљаса илетчě.

15. Ke2 : d4 çини те начар пулатчě, хурисем Cc4 : f1 çиме пултарнă.

15. . . . . Ce7—b4!

Хурисен лайăх позици. Вěсен ферзн, икě слонě тата лаши шуррисене хыта хěстерееççě (70-меш диаграммăна пăх).

70.



16. Ke2—c3 . . . .

Шуррисен ирěксěрех качествă пама лекрě,

16. c2—c3 сикнě пулсан, Cc4 : e2 17. Фd2 : e2 Cb4 : c3

18. Ла1—d1 Сс3 : d4 хурисем вăййа çамăллăнах выљаса илчĕç.

| | |
|---|---|
| 16. . . . . | Сс4 : f1 |
| 17. Сg2 : f1 | Кс6—е7! |

Лайăх ход. с3 лаша çыхăнса ларнипе тата е3 слон „çакăнса“ тăнипе хурисем усă курса, лашине d5 çине илсе пыраççĕ.

| | |
|---|---|
| 18. Фd2—d3 | . . . . |

Хăтăлма май çук.

| | |
|---|---|
| 18. . . . . | Сd4 : с3 |
| 19. Фd3 : с3 | Ке7—d5 |

Пĕр вăхăтрах икĕ фигурăна тапăнса, тата слона выљаса илсе, хурисем ĕçе ăнăçтарчĕç. Шуррисем парăнчĕç.

## *ОТВЕТСЕМ.*

Хăш-хăш ыйтусем тăрăх епĕр каланă çĕртре йе диаграммăсем çинче ответ тупма пулаŤ пулсан, епĕр çавăн çине кăна пăхма хушатпăр.

1. 5-мĕш диагр. пăх.
2. Сылтăм йенче.
3. Шуррисем.
4. Йаланах фигурăна илме тăрăшни усăллă мар.
5. Фигурăсем малала та кайала та çÿреççĕ, пешкăсем малала кăна.
6. 13-мĕш стр. тата малала та пăх.
7. Пешкăсем çÿрессе малала çÿреççĕ, çийессе айкинеле (диагонаљпе) çийеççĕ. Сăмахран, шурă пешкăсем —d3 тата с4, хурисем с6, d5 çинче тăраççĕ пулсан шуррисем малтан сикмеле пулсан, çапла çийеççĕ—с4 : d5, с6 : d5; малтан хурисем сикеççĕ пулсан—d5 : с4, d3 : с4.
8. Сăмахран, шуррисем d2 çинчен d4 çине сиксен, хурисем е4 çинче тăраççĕ пулсан, вĕсем „иртсе кайнă чухне“ шурă пешкăна çиме пултараççĕ—е4 : d3.
9. Пешкă хăма хĕрринчи горизонтаљ çине çитсен кирек хăçан та урăх фигурă пулаŤ, çапла вара хăма çинче пĕр вăхăтра темиçе ферзĕ, темиçе слон, темиçе лаша пулма пултараŤ.

10. Çук.
11. 13-мĕш стр. пăх.
12. Пĕр вăхăтрах короĺпа тата ладйапа сикнине рокировка теççĕ, ăна çапла паллă тăваççĕ; 0—0 (кĕски), 0—0—0 (вăрăмми).
13. 24-мĕш стр. пах.
14. Йут фигура хăратса тăракан поле урлă ладйа каçма пултарать, король пултараймасть.
15. 24 мĕш стр. пăх.
16. Короля çимеле ларни.
17. 25-мĕш стр. пăх.
18. 61-мĕш тата 69 мĕш диаграммасене пăх.
19. Фигурă вăйне начар фигурăпа—пешкапа танлаштарса пĕлеççĕ.
20. Ферзĕ ладйапа слонтан вăйлăрах; ладйа икĕ слонтан вăйсăртарах; лаша икĕ пешкăран вăйлăрах.
21. Пĕрисем фигурă, пешкă йе качества выляса илнине „материальное преимущество" (материал йенчен малтарахра тăрать, вăйлăрах) теççĕ.
22. 29-мĕш стр пăх.
23. тата 24. 20-мĕш диагр. пăх.
25. Короля шах панă хыççăн вăл ниçта та кайма пултараймасть пулсан ăна мат пулнă. Шах пулмасăрах король ниçта та кайма пултарайманнине (урăх фигурăсемпе те ниçта та кайма май çук пулсан) пат теççĕ. (66-мĕшпе 67-мĕш диагр. пăх.).
26. Хăçан та хăçан вылякансен вăйĕсем пĕр пек пулса нихăшĕ те выляса илеймест пулсан, йалан шах парсан, пат пулсан, мат пама вăй çитмест пулсан.
27. 37 мĕш стр. пăх.
28. Планпа вылyас тени—ăнланса илсе, кашни хода (хăвăнне анчах мар, хирĕççисене те) шухăшласа, пĕлсе тăрса, кашни ход малтан тунă ходран тухса пымала выляни.
29. Центр тавра
30. Центрта.
31. 32-мĕш диагр. пах.
32. Мĕншĕн тесен, вăхăт нумай иртет; çав вăхăтра хирĕç вылякан лайăх вăй илсе хĕстерме пултарать.
33. Çук.
34. 16 ходран ытла мар.

35. Кĕтесри клеткаран лаша кайма пултарнă полĕ çинче.

36. Короља e1 линии çине илсе пырсан партине вылљаса илме пулаť. Сăмахран, 1. Крg4 Крf8 2. Крf4 Крg7 3. Кре4 Крg8 4. Крd5 Крf8 5. Кре6 Крg7 6. Кре7! хурисем ирĕксĕрех пешкăна парса, партийе те вылљаса йараççĕ.

37. Малтан шуррисем сиксен партийе вылљаса илеççĕ: пешкă ферзĕна тухса кайаť. Малтан хурисем сиксен çĕнтерӳ никама та пулмасť; король тăваткăла лекет. Сăмахран, 1. . . . . . Крf3 2. а4 Кре4 3. а5 Крd5 4. а6 Крс6 5. а7 Крb7.

38. I—пулаť, II—пулмасť, III—пулаť.

39. Шурă короља 6-мĕш горизонталь çинче, хура короља 3-мĕш горизонталь çинче пулсан.

40. Çĕнтерӳ никама та пулмасť: Сăмахран, 1. . . . . Крg7! 2. Кре6 Крf8 3. Крf6 йе h6-пат. Йе 1. . . . . . Крg7! 2. h6 + Кр : f7! (Кр : h6 çисен, 3. Кре6 Крg7 4. Кре7 шуррисем вылљаса илеççĕ), çĕнтерӳ никама та пулмарĕ.

41. Шуррисем вылљаса илеççĕ. Сăмахран, 1. Кре6 Крb3 2. Крd5 Крb4 3. Крс6 Кра5 4. Крb7 Крb5 5. Кр : а7 Крс6 6. Крb8!.

42. Дебӳт, мителшпил, ендшпил.

43. 73-мĕш стр. пăх.

44. 56-мĕш диагр. пăх.

45. 55-мĕш диагр. пăх.

46. 1. Крf4 h1ф 2. Крg3 ∾ шуррисем ферзĕпа мат параççĕ. Йе 1. . . . . Крh1 (йе 1. . . . . . Крf1, вара 2. Ф : h2) 2. Крf3 (g3) тепĕр ходран мат.

47. 1. b6 Кb7! 2. Ке6! (К : b7?—пат) Кс5 3. Крс8 Кb7 (йе К : е6 4. b7+ малала та) 4. Кс7 мат.

## ШАХМĂТ ТЕРМИНĔСЕМ:

**Фигурăн абсолютлă вайĕ**—фигурă вăйне начар фигурăпа—пешкăпа танлаштарни, шахмăт хăми çинче пулакан положенинче ун пек шайлаштармасçĕ.

**Фигурăна илес, çийес, çапас тени**—йут фигурăна илсе вăл ларнă клеткăна хăвăн фигуруна лартни. Илнĕ фигурăна хăма çинчен илсе хураççĕ.

**Вариант**—пĕр шухăшлана плана тĕпĕр тĕслĕ те пурнăçлама май пурри.

**Вертикаль**—çӳлтен аялала, йе аялтан çӳлеле кайакан линисем.

**Йалан панă шах**—выляакан йалан шах пама пултарни.

**Вилкă**—пешкă пĕр вăхăтрах икĕ фигурăна çиме пултармала ларни.

**Горизонталь**—сулахайран сылтăмала, йĕ сылтăмран сулахайала кайакан линисем.

**Дебӳт**—партин малтанхи пайĕ.

**Диагональ**—чалăшшăн, пĕр тĕслĕ полĕсем урлă кайакан лини.

**Диаграммă**—шахмăт хăмине ун çине фигурăсем ӳкернĕ ӳкерчĕк.

**Ахаль пани**—хăвăрт вăйа пухма, йе лайăх позици йышăнас шутпа фигурăна йе пешкăна ахалех пани.

**Задачă**—фигурăсене йатарласа кăтартнă хисеппе ход туса мат парасси.

**Партийе çырса пыни**—фигурăсемпе пешкăсем çӳренине йĕркипе çырса пыни.

**Качествă**—ладйапа слон (йе лаша) хушшинчи уйрăмлăх.

**Квалификаци**—шахматиствайне, вăл мĕнле выляннине пахаласа шах организацийĕ кăтартакан паллă.

**Комбинаци**—темиçе ход туса пĕр шухăшлана плана пурнăçлани.

**Хĕрринчи пешкă**—а-па h линисем çинче ларакан пешкă.

**Сăмăл фигурăсем**—слон тата лаша.

**Материал**—шахмăт фигурисемпе пешкăсем.

**Маçтăр**—шахмăтла ăста выляакан.

**Мат**—короля шах парсан вăл урăх çĕре кайма, хӳтĕленме пултарайманни.

**Улăшни**—хăвăн фигуруна ун хакне тăракан йут фигурăпа улăштарни.

**Мителшпил**—партин варринчи, дебӳт хыççăн выляакан пайĕ; ку пайра икĕ выляканĕ те йе материал илме, йе позицине лайăхлатма тăрăшаççĕ.

Нотаци—хăма çинчи клеткăсене палăртса çырни.

Оппозици—пĕр лини çинче (горизонталь, диагональ, вертикаль) икĕ король хире хирĕç ларни, вĕсем хушшинчи клетка хисепĕ иккĕ çине валеçĕнмеле мар пулни.

Фигурăсене танлаштарнă (относительнă) вăй фигурăсен вăйне хăма çинче пулакан положенинче танлаштарни.

Парти—пуçламăш положенинчен пуçласа мĕн вăйă пĕтиччен (мат йе çĕнтерӳ никама пулмала мар пуличчен) тунă ходсем.

Пат—шах памасăрах король ниçта та сикме пултарайманни.

Пешкăсен цепĕ (карти—пĕр тĕслĕ икĕ пешкă йе темиçе пешкă та çыхăнса хыçалта ларакан пешкă малта лараканнине сыхлани.

Позици—партире пулнă положенинче икĕ йенчен вылякансене те вĕсем мĕн лайăххипе лайăхмаррине кăтартни.

Практикă (практикăри)—выляса вĕренни.

Темп—кирлĕ ходсем тума ёлкĕрессе.

Чейе ход, вăрттăн ход—партине лайăхлатма тунă кĕтсе илмели ход. (Вырăсла „Тихий ход").

Турнир—темиçе выляканăмăртса выляни.

Йăвăр фигурăсем—ферзĕпа ладйа.

Флангсем—ферзĕ фланги а-па d хушшинчи клеткăсем, король фланги—е-пе h хушшинчи клеткăсем.

Ход—фигурăсене сиктерни.

Центр—шахмăт хăми çинчи d4, d5, e4, e5 полĕсем.

Цугцванг—(нимĕçле сăмах)—ирĕксĕр тумали ход.

Шах—короля çиме пултарни.

Ендшпил партин йулашки пайĕ. Ку пайра фигурăсем сахалланаççĕ тата король хыттăн выляма пуçлаТ.

Етюд—фигурăсене лартса задачă пек тухни, анчах кунта ход хисепне кăтартмасăр, вăййа выляса илмеле йе çĕнтерӳ никама пулмала мар тумала.

---

Редактор Н. Васянка. Перев. М. Афанасьев. Техред. Ф. Яковлев.
Послано в производство 16/I—38 г. Подписано к печати 11/II—38 г.
Уполн. Чувашлита № 1673 Заказ № 49. Тир. 3000 экз. Чувашгиз № 17.
Формат бумаги 60×92 1/16 Об'ем 5,5 п. л.

Тип. № 1 Чувашполиграфтреста г. Чебоксары, Дом печати

Хакĕ 1 т. 50 пус

Я. Г. РОХЛИН

# КАК НАУЧИТЬСЯ ИГРАТЬ В ШАХМАТЫ

на чувашском яз.

ЧУВАШГОСИЗДАТ ◆ 1938